Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ÇЕНТАБĔР
15
КĔÇНЕРНИКУН
213 (5026) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕсене лайăх хатĕрленмеле

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ йышăннă тăрăх, пайантан вара комсомол комитечĕсен, комитетсем çук çĕрте—комсомол пуçламĕш организаци çекретарĕсен, цехри, çменăри тата вĕсемпе тан организацисен бюровĕсен, комсоргсемпе группоргсен отчочĕсемпе суйлавĕсем пуçланмалаччĕ. ПСÇЛКС пуçламĕш организацисем отчотпа суйлава çителĕклĕ хатĕрленмен пирки, ПСÇЛКС Тĕпкомĕ отчотпа суйлав пухăвĕсене октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа иртерме йышăннă. Комсомол организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем комсомолĕцсен большевикла сыхăлăхне, комсомолăн çамрăксем хушшинчи политикăлă воспитани ĕçне тата ытларах вăйлатас, Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава тивĕçлипе хатĕрленсе иртерес, комсомол докуменчĕсене улăштарас ĕçе организацилесе комсомол хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке тăвас, комсомол пуçламĕш организацисен ĕçĕсене пур майсемпе те тĕреклетес палăпа иртмеле.

Комсомол организацисем парти йертсе пынипе хăйсен ĕçĕсене чылайах лайăхлатрĕç. Комсомол организацисенче политикăлă сыхăлăх вăйланчĕ. Вĕсем сойузра тăман çамрăксем хушшинче лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç, комсомолпа сойузра тăман çамрăксем хушшинчи çыхăну тĕреклетчĕ.

Комсомол организацисем социалисăм строительствин тĕрлĕ участокĕсенче малти рете тăрса кĕрешекен çамрăксен шучĕпе ÿссе пырать. 1937 çулти октябрĕртен пуçласа июлĕн 1-мĕшне çитиччен комсомол чăваш организацине çĕнĕрен 11 пин çын ытла кĕнĕ.

Тăван çĕршыва, комунисла партине, Аслă Сталина вĕçĕмсĕр йуратни—акă мĕн хавасланатарать совет çамрăкĕсене Ленинла-Сталинла комсомол ретне тăрса социалисăм обшчествин активлă строителĕсем пулса кĕрешме.

Комсомол пуçланни 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май, комсомолĕцсем промышленнăçра та, йалхуçалăхĕнче те, культура фронтĕнче те тĕлĕнмеле паттăрлăхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах, комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне иртерме хатĕрленни комсомол организацисен ĕçĕнчи чылай пысăк çитменлĕхсене кăтартрĕ. Комсомол организацисем çаплах совет çамрăкĕсемпе çĕнĕрен комсомола илнĕ çамрăксене политикăлă воспитани парас йенĕпе начар ĕçлесе пыраççĕ. Комсомола çĕнĕрен илнĕ çамрăксене обшчествăлă политикăлă ĕçе çителĕклĕ хутшăнтармаççĕ, сойузра тăман çамрăксем хушшинчи ĕçе те çителĕклĕ теме çук.

Калас пулать, чылай организацисенче ку тарана çитсе те комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕ умĕнче тăракан задачăсене çаплах тивĕçлипе ăнланса илеймен.

Отчотпа суйлав пухăвĕсене иртересси пĕчĕк ĕç мар. Вăл политикăлă пысăк екзамĕн. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче комсомолĕцсем хăйсен организацин çитменлĕхĕсене пĕтĕмпех уçса памала. Вĕсем хăйсене йертсе пыракан работниксен пултарулăхне, политикăлă ĕçре пиçсе çитнине тĕрĕслемеле. Отчотпа суйлав пухăвне лайăх хатĕрленмеле, организацилемеле.

Çавăн пек тăвас тесен, комсомол райкомĕсен, пур пуçламĕш комсомол организацисен, кашни комсомолĕцă отчотпа суйлав умĕнче тăракан задачăсем çинчен, ПСÇЛКС Тĕпкомĕ суйлава иртерес тĕлĕшпе кăларнă инструкци çинчен тĕплĕн ăнлантарса памала. Çак инструкцине кашни комсомолĕцăн лайăх пĕлсе тăмала.

Нумай çĕрте комсомолĕцсем кăна мар, комсомолти йертсе пыракан актив та суйлав инструкцине тĕплĕн вĕренмен. Сăмахран, Çĕмĕрле райкомĕ çак кунсенче ПСÇЛКС Тĕпкомĕ йышăннă инструкцине комсомол активне вĕрентес майпа, районри актив пухуне 85 çынна чĕннĕ, вĕсенчен 29 çын кăна пухăннă. 55 комитет çекретарĕсемпе комсоргсенчен 7-шĕ кăна пынă. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ йышăннă инструкци çинчен Обкомол представителĕ доклад туса парсан, активиссем пĕр ыйту та паман, тухса та калаçман. Ку ĕнтĕ комсомол активĕ отчотпа суйлав пухăвĕсене иртерес ĕç çине çиеелтен пăхнине кăтартать.

Комсомол организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсене большевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарса йанă, комсомолти демократине çирĕппĕн тытса пынă никĕс çинче иртермеле. Çакăн пек туни вăл комсомол организацисенче пайанхи кунччĕнех пулса пыракан тĕп çитменлĕхсене палăртса пĕтерме, комсомолăн пĕтĕм ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Комсомол руководителĕ лайăх тата тарăн шухăшлă отчот туса панинчен комсомолĕцсен активлăхне ÿстересси, пухура критикăпа самокритикăна анлăн сарса йарасси килет. Çавăнпа та отчота хатĕрленесси çине уйрăмăнах хыттăн пăхмала. Отчота хатĕрленнĕ çĕрте комсомол пуçламĕш организацисен çекретарĕсене пулăшма комсомол активнех хутшăнтармала.

ПСÇЛКС комитечĕсен, группоргсемпе комсоргсен отчочĕсенче комсомолăн кулленхи политикăлă пурнăçĕ анлăн та тарăн курăнса тăмала.

Комсомол организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленнĕ май, комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленессине хальхинчен темиçе хут ытла вăйлатмала.

Парти организацисен комсомолăн пуçламĕш организацисене отчотпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленес ĕçре куллен-кун пулăшса пымала. Партком çекретарĕсемпе парторгсен çакна асра тытмала: вĕсем большевикла йертсе, практикăлă ĕçре пулăшса пынинчен комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕсене ăнăçулăн иртерессi, çапла вара комсомол организацисен ĕçĕсене тĕреклетсе пырасси килет.

ПСК(б)П историне вĕренесси çинчен

ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн Пленумĕ 1938 çулти çентябрĕн 11-мĕшĕнче йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ Сталин йулташ çывăх хутшăнса ĕçлесе хатĕрлесе кăларнă „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" пирĕн партин тата пĕтĕм тĕнчери коммунисла йухăмăн идейăлă пурнăçĕнче пысăкран та пысăк событи пулса тăрать. Ленинăн—Сталинăн аслă партин аслăлăхла историйĕ пулса тăракан „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" парти историне вĕренес ĕçе калама çук пысăк теорилĕ çÿлĕше çĕклет.

ПСК(б)П историне вĕренни революцилĕ сыхăлăха ÿстерме, коммуниссен, комсомолĕцсен тата мĕн пур ĕççыннисен идейăлă пĕлĕвне тата çапăçу пултарулăхне вăйлатма пулăшать, вĕсене ленинисăмăн тата большевикла парти Тĕп Комитечĕн йалавĕ тавра, совет халăхĕн çулпуçĕ тата учителĕ—Сталин йулташ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçтерет.

ПСК(б)П историне тимлĕн те тарăнăн вĕренни парти членĕсемпе кандидачĕсене, комсомолĕцсене, сочувствуйушчисене тата пĕтĕм совет халăхне ленинла-сталинла идейлăхпа хĕçпăшаллантармали никĕс пулать тесе шутласа,—ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн Пленумĕ çапла йышăнать:

1. Партин кашни членĕпе кандидачĕ умне, тата чи малтанах парти активĕпе парти руководителĕсен кадрĕ умне „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тăрăх ПСК(б)П историне вĕренессине вĕсен пĕтĕм партилĕ ĕçĕнчи чи кирлĕ задачă вырăнне лартас.

Кашни коммунисăн çакна тĕплĕн ăнланса илмеле: ленинла-сталинла парти историне ăнланни, большевисăма вĕренни унăн халăх умĕнче партилĕ тивĕçлĕхпе обйазăннăç пулса тăрать, мĕншĕн тесен унсăрăн коммуниссем коммунисăмлă обшчествăна туса çитерессишĕн кĕрешнĕ çĕрте массăсене организацилесе йертсе пыракансен хăйсен хисеплĕ те ответлă рольне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултараймаççĕ.

Пленум партин мĕн пур организацисемпе вĕсен руководителĕсене ПСК(б)П историне вĕреннĕ çĕрте ПСК(б)П членĕсемпе кандидачĕсене пур йенчен те пысăк пулăшу пама хушать.

2. „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тăрăх ПСК(б)П историне вĕренессине парти вĕренĕвĕн пĕтĕм ĕçĕнче тĕп вырăна хурас.

ПСК(б)П историне вĕренес тĕлĕшпе кружоксемпе курссен хисепне анлăн сарса йарас, ПСК(б)П историне тимлĕн вĕренме кашни коммунисла сочувствуйушчине ĕçре май тупса парас.

Çакăнпа пĕрлех парти активĕ вальли, ПСК(б)П членĕсемпе кандидачĕсем тата сочувствуйушчисем вальли лекцисем организацилессине анлăн туса пырас.

3. Пленум ПСК(б)П историне парти ĕçĕнчи кашни руководительтата пĕтĕм парти активĕ тарăнăн вĕренни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине уйрăмах палăртать тата ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн бюровĕпе райкомсене ПСК(б)П историне вĕренес тĕлĕшпе парткомсен мĕн пур çекретарĕсемпе членĕсем вальли, çавăн пекех тата пуçламĕш парторганизацисен парторгĕсем, райком çекретарĕсем тата парти аппаратĕн работникĕсем вальли занятисем организацилеме хушать.

Пленум парти ĕçĕнчи руководителсен—ПСК(б)П хула комитечĕн, райкомсен, парткомсен çекретарĕсен ПСК(б)П историне парти активĕпе ПСК(б)Партин мĕнпур членĕсем вĕренессине организацилемеле çеç мар, тата парти историне вĕренекен парти активĕн занятисене хăйсен йертсе пымала, тесе шутлать.

4. Партин мĕн пур организацийĕсене ПСК(б)П историне вĕренес ĕçе йĕркелесе йама комсомол организацисене кирлĕ пулăшу пама хушас.

ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн бюроне—комсомол активĕ, комсомолĕцсем тата пĕтĕм совет çамрăкĕсем ПСК(б)П историне вĕренес тĕлĕшпе ПСÇЛКС Мускав хула комитечĕ туса иртерекен ĕçсене пăхса тухма хушас.

5. ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн бюроне тата райкомсене, ĕçе профсойузсене хутшăнтарса, ПСК(б)П историне партире тăман актив хушшинче вĕренес ĕçе сарса йама тата лекцисем, докладсем, калаçусем, консультацисем т. ыт. туса, мĕн пур ĕççыннисене ПСК(б)П историпе анлăн паллаштарма хушас.

6. Пленум парти ĕçĕнчи мĕнпур руководителсенчен ПСК(б)П историне вĕренес ĕçе кунсерен татăклăн йертсе пыма ыйтать, партин мĕнпур организацисене ПСК(б)П историне вĕренес тĕлĕшпе занятисем туса иртерме чи лайăх пропагандиссен кадрĕсене уйăрса пама тата пропагандис ĕçне пĕтĕм парти активне хутшăнтарма хушать.

Партин Шупашкар хулинчи организацин V-мĕш конференцийĕ

Çентябрĕн 13-мĕшĕнче 12 сехетре партин Шупашкар хулинчи организацин V-мĕш конференцийĕ уçăлчĕ.

Конференци 9 çынран президиум суйлать.

Хисеплĕ президиум суйласси çинчен А. А. Волкăв панă сĕнĕве конференци тăвăллăн алă çупнипе йышăнчĕ. Хисеплĕ президиума Сталин йулташа, Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Жданăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов, Хрушчов, Димитров, Тельмăн тата Хосе Диас йулташсене суйларĕ.

Мандат комиççине, секретариата суйланă тата кун йĕркине йышăннă хыççăн, конференци тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе хула комитечĕ туса ирттернĕ ĕçсем çинчен хула комитечĕн çекретарĕ Лапин йулташ докладне итлерĕ.

Лапин йулташ хăйĕн докладĕнче хула комитечĕ тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн туни çинчен путлĕн каласа пама пултараймарĕ. Доклад шĕвĕ тата критикăсăр пулчĕ, докладчик чи кирлĕ ыйтусене çутатса памасăр, çиеелтен шăйăрттарса иртсе карĕ.

Доклад хыççăн пренисем пуçланчĕç. Пренире тухса каланă Çутруков, Чурилăв, Краснов йулташсем Стройтрест, електростанци, Типографи, кирпĕч савăчĕн т. ыт. учрежденисемпе организацисен ĕçĕсене хытă критиклерĕç.

Каçхи ларура пренире Чапрайĕвă, Чукашов, А. А. Волкăв, Игнатйĕв, Аникин, Иванов А., Угольков, Новиков, Калинкина, Захарăв, Терентйĕв, Депутатăв, Никитина тата Васильĕв йулташсем тухса каларĕç. Уйрăмăнах А. А. Волкăв йулташ (Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ) тухса калани критикăпа самокритикăна вăйлăн пуçарса йама пулăшрĕ.

Вăл хăйĕн сăмахĕнче ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумĕ хыççăн пирĕн парти тăшмансене аркатса тăкас тĕлĕшпе нитĕ те пысăк ĕçсем туса ирттерни çинчен, пирĕн çĕршыв хăватлăн ÿссе пыни çинчен чарăнса тăчĕ. Çав вăхăтрах хула комитечĕн, уйрăмăнах унăн пĕрремĕш çекретарĕн Г. И. Иванов йулташăн пысăк та чăтма çук йăнăшсем çинчен, Лапин йулташăн докладĕнчи çитменлĕхсем çинчен каларĕ.

Иванов тăшмансене тата шанчăксăр етемсене хÿтĕленĕ, вĕсене ответлă вырăнсене лартма тăрăшнă. Сокольников троцкисăн политикла сăн-пичĕ Ивановшăн та, Лапиншăн та паллă пулнă. Анчах ăна йулашки вăхăтченех тăрă шыв çине кăларман. Буржуалă националиссене Ф. Матвейĕва, Вастрÿка, пысăк усламçă ывăлне И. Самарина, ес-ера Л. Спасăва хÿтĕлесе пурăннă, вĕсене ĕçе вырнаçтара-вырнаçтара лартнă. Т. Васильйĕва тăрă шыв çине кăларассине халиччĕнех тăсса пынă, ун çинчен пулнă материалсене пăхса тухмасăр выртарнă, ăна нумай укçа-тенкĕ парса курорта йама хушнă. Критикăпа самокритикăна хисеплемен, чылай чухне ăна хĕссе пынă.

Волкăв йулташ йулашкинчен Иванов йертсе пыма пултараймасть, тесе вывăд тăвать.

Конференци политикла шанчăкран тухнă Н. Йурйĕва конференцинчен кăларса йамала турĕ, вăл партире тăрасси çинчен уйрăммăн пăхса тухма хушнă.

Çентябрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи ларура 15 делегат тухса каларĕç. Г. Иванов хăйĕн сăмахĕнче ытларах тăшманла кивĕ руководствă вăхăтĕнчи хуçалăхри сăтăрла ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕ. Анчах сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерсси начар пынишĕн чи малтан хăй айăпли çинчен каламарĕ, хăйĕн йăнăшсене большевикла тÿрĕлĕхпе йышăнмарĕ. Вĕсем çинчен каламасăр иртсе кайма, йе айăпа урăх оргăнсем çине йăвантарма пăхрĕ.

Çакăн хыççăн А. А. Волкăв йулташ тепĕр хут тухса каласа: епĕ Иванова политикă тĕлĕшĕнчен шанма пултараймастăп, терĕ.

Шишкин йулташ строительствă ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсем çинчен чарăнса тăрать. Хула комитечĕ строительствă ĕçне йертсе пыманни çинчен калать.

Хула комитечĕ халиччĕнех Т. Васильйĕва хÿтĕлесе пурăннă. С. Петровпа Т. Васильйĕв Турханта тăшманла ĕç тунине тăрă шыв çине кăларнăшăн Охотникăва елекçĕне кăларнă. Спасăв ес-ера тăрă шыв çине кăларма тăнă Стекольщикăва та, елекçĕ тесе, партирен кăларнă. Орепин сăтăрла ĕçсем тунă тесе каланă Рубльов йулташпа та çавăн пекех истори пулса иртнĕ. ПСК(б)П хула комитечĕпе Обком çекретарĕ Иванов çĕнĕрен ответлă ĕçсене лартнă работниксене ĕçлеме условисем туса парассишĕн, вĕсен авторитетне çĕклессишĕн тăрăшман.

Каçхи ларура Валькин, Дубăв, Красильникăв, З. Андрейĕвă, Андрейĕв, Калиновский, Сомăв, Ахазăв, Арзамасцĕв, Йакăвлĕв, Тагачин, Митрофанăвă тата Козульайĕв йулташсем тухса каларĕç.

* * *

Каçхи лару хупăнас умĕн конференци, Г. И. Иванова политикла шанчăксăр çын вырăнне хурса, ПСК(б)П хула комитечĕн пĕрремĕш çекретарĕнчен тата хула комитечĕн пленум составĕнчен кăлармала турĕ.

Англири тред-йунионсен конгресĕ

ЛОНДАН, çентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англири тред-йунионсен Блекбуль хулинче пулса иртекен конгресĕн ĕнерхи ларăвĕнче пуринчен ытла тулти политикă ыйтăвĕсене, уйрăмăнах республикăлă Испанине пулăшмали ыйтусене сÿтсе-йавнă. Горняксен профсойузĕн представителĕ Лаутĕр хăйĕн сăмахĕнче йулашкиултă ернне хушшинче Англири горнякосем Испани республикине пулăшмали фонда 68 пин фунт стерлинг пуçтарса пани çине кăтартнă. Кунсăр пуçне тата горняксем Испанире темиçе ача çурчĕ организацилесе, вăл çуртсене 7 çул хушши хăйсен вăйĕпе тытса тăма обйазательствă панă. Лаутĕр конгреса пуçтарăннă мĕн пур профсойузсенчен Испанири рабочисене горняксем пулăшнă пек пулăшма ыйтнă.

Тред-йунионсен генеральнăй совечĕн председателĕ Ельмин Испанири рабочисен пĕтĕмĕшлĕ сойузĕ Англири профсойузсем патне йанă саламлă çырăва вуласа панă. Вăл çырура Испанири рабочисем çĕнтерÿ тăвачченех çапăçма хатĕрри çинчен каланă. Саламлă çырăва конгресри делегатсем хытă алă çупса йышăннă.

Лару пĕтес умĕн, конгрес чукунçул çинчи служăшчисем тăратнă тата унпа електриксемпе ытти профсойузсем килĕшнĕ резольуцине йышăннă. Вăл резольуцире Англи правительстви Германири, Италири, тата Йапонири фашисла правительствăсене пулăшса пырас политикă тытса пыни çинчен тата çапла тунипе вăл вăрçа вăйлатма майсем пани çинчен каланă. Резольуцире Англи правительстви фашисăма хирĕç мĕнле пулăшнине те хирĕç тăма обйазательствă пани пур.

Китайра митингсемпе демонстрацисем пулса иртеççĕ

ШАНХАЙ, Çентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Лигă наци совечĕн Çессийĕ уçăлас майпа Китайăн мĕн пур хулисенче массăлă митингсемпе демонстрацисем пулса иртеççĕ, вăл митингсемпе демонстрацисенче Лигă наци патне Йапони агрессăрне хирĕç халех санкцисем тума ыйтса чĕнсе каланисем йышăнаççĕ. Китайри морйаксен сойузĕн 800 пин членĕ Лигă нацинчен Лигă наци уставĕн 17-мĕш статйине (агрессăра хирĕçле санкцисем çинчен) Йапонине хирĕç пурнăçа кĕртме ыйтса, Лигă наци йенчен татăклă позици пулсан çеç пĕтĕм тĕнчере мир пулассине палăрă тунă. Китайри хаçатсем çак ыйту пирки чылай статйасем пичетленĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Генлейнăвĕцсем провокаци тăвассине вăйлатаççĕ

Çентябрĕн 12-мĕшĕнче, Германи фашисĕсен Нÿрнбергри „сйесĕнче" Гитлĕр сăмах тухса каланă хыççăн, генлейнăвĕцсем пĕтĕм Судет облăçĕ тăрăх „демонстрацисем" организацилене тата йунлă çапăçусем чылай тунă. Чи пысăк тытăçусем Хебе хулинче пулса иртнĕ. Темиçе çĕр генлейнăвĕц каçхине социал демократсен Халăх çурчĕ çине тапăннă, вĕсем тепĕр ушкăнĕсем чех фирмисен магазинĕсене çĕмĕрме тытăннă. Рабочисем, Халăх çуртĕнче баррикадăсем туса генлейнăвĕцсене хирĕç калама çук хыттăн тăнă. Çак тытăçусенче тăвата çынна вĕлернĕ, вĕсенчен виççĕшĕ—генлейнăвĕцсем, тепри—чех рабочийĕ. Красно-Брженно хулинче (çурçĕр Чехи) генлейнăвĕцсем провокацилĕ майсемпе тунă тытăçусенче икĕ çынна вĕлернĕ, Теплицĕ темиçе çынна амантнă, Стршибро хулинче (хĕвеланăç Чехи) темиçе вуншар çынна амантнă.

Хебе хулинчи событисем мĕнле иртнине Англи „набльудателĕ" Пратт та курнă. Вăл хăйне питех те киревсĕр тыткаланă. Генлейнăвĕцсем ăна чысласа оваци тусан, Пратт çапла ответленĕ: „Епĕ Судет облăçĕнчи событисене пысăк интереспа сăнаса пыратăп. Епĕ хам çапла шутлатăп: Судет нимĕçĕсен требованисене пурнăçа кĕртмелех",—тенĕ. Чылай хаçатсем: Англин официаллă „набльудателĕ" хăйне ытла та киревсĕр тыткалать,—тесе палăртаççĕ.

„Епĕр парăнмастпăр"—çакă вăл Чехословаки республикĕнчи халăхсен лозунгĕ пулать.

Нумай çынлă митингсем, пухусем тата демонстрацисем пĕтĕм Чехословаки тăрăх пулса пыраççĕ. Хăватлă демонстрацисем пуринчен ытла чикĕ çывăхĕнчи районсенче пулса иртнĕ. Сăмахран, Глучине хулинче (çурçĕр Моравн) 30 пин çынлă демонстраци пулса иртнĕ, вăл демонстрацире çывăхри йалсенче пурăнакан халăхсем пурте, вырăнти гарнизон çарĕсем, легионерла тата сокольски организацисем пулнă. Унанов хулинче (кăнтăр Моравн) 15 пин çынлă демонстраци пулнă. Пур çĕрте те демонстрацисем фашисăма хирĕç тăнине хыттăн палăртнă.

„Епĕр парăнмастпăр" текен лозунг Чехословаки республикĕнчи халăхсен пĕтĕмĕшлĕ лозунгĕ пулса тăнă.

(ТАСС).

ГЕНЛЕЙНАВЕЦСЕМ ЧЕХОСЛОВАКИ ПРАВИТЕЛСТВИНЕ ПРОВОКАЦИЛЕ УЛЬТИМАТУМ ЙАНА

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, судет-нимĕç партине йертсе пыракансем çентябрĕн 13-мĕшĕнче Чехословаки правительстви пуçлăхĕ патне ультиматум йанă. Вăл ультиматумра Судет облăçĕнчи сакăр округра туса хунă чрезвычайлă лару-тăрăва пăрахăçа кăларма, государствă полицине Судет облăçĕнчен кайала чĕнсе илме, полицейскисен функцийĕсене хула пуçлăхĕсен аллисене пама ыйтнă. Ультиматумра çапла каланă: çак требованисене 6 сехет хушшинче пурнăçа кĕртмесен, малашне пулма пултаракан событисемшĕн Чехословаки правительстви ответлă пулса тăрать,—тенĕ.

(ТАСС).

Генлейнăвĕцсен ультиматумне йышăнман

Чехословакирен илнĕ çведĕнисем тăрăх, Чехословаки правительстви генлейнăвĕцсен провокацилĕ ультиматумне йышăнман. Çавăнпа пĕрлех калаçусене малашне туса пыма влаксем уçах йулаççĕ,—тесе пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Гитлĕр сăмахĕ

Çентябрĕн 12-мĕшĕнче Германи фашисĕсен Нÿрнбергри „сйесне" хупас умĕн Гитлĕр сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Чехословаки республикине хыттăн хăратса каланă.

(ТАСС).

Чехословакире генлейнăвĕцсем путч тунă

Çентябрĕн 13-мĕшĕнче çĕрле генлейнăвĕцсем Судет облăçĕнче путч организациленĕ. Çĕрле 12 сехетрен пуçласа хĕвеланăçри Чехин 40 пунктĕнче—Хебе хулипе Усти Над Лабем хули хушшинче Чехословакири гитлĕрăвĕçсен хĕçпăшаллă выступленийĕсем пулса иртнĕ. Çав мĕн пур выступленисене йатарласа организациленĕ пулнă, вĕсене пĕр центртан йертсе пынă пулмала. Чылай пунктсенче генлейнăвĕцсем почтăна тата телеграфа хăйсен аллине тытса илме пултарнă, Чехословаки столиципе—Прагăпа çыхăнтаракан телеграфпа телефон пралукĕсене касса татнă, чукунçул çинчи служăшчисене тата чикĕри хурала арĕсленĕ. Çавăнпа пĕрлех генлейнăвĕцсем йеврей тата чех халăхне çĕмĕрме (погром тума), антифашиссене хирĕç террорлă актсем тума, демократилĕ халăха хирĕç хĕçпăшалпа тапăнма пуçланă. Хебе хулисĕр пуçне, вăйлă хĕçпăшаллă тапăнусем Карлови Варăсенче, Карлсбадра, Шумперкра тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ. Саксони чиккинче икĕ вырăнта генлейнăвĕцсем Германирен суйласа илнĕ охранниксене тата „судет-нимĕç легионĕн" членĕсене икĕ пин çынна йахăн чикĕ урлă каçарса йанă.

Полици, жандармери, хăшпĕр вырăнсенче тата регулярлă çарсем пулăшнипе путча (пăлхава) пĕтерсе лартнă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Кунта çакна палăртса хăвармала: полици тата çар чăçĕсем пăлхавçăсемпе çапăçнă чухне, центр распорйаженийĕ тăрăх, хĕçпăшалпа уса курман.

Çентябрĕн 13-мĕшĕнче, кăнтăрла тĕлне, генлейнăвĕцсен выступленийĕсем пулнă мĕнпур пунктсенче те малтанхи пек йĕрке туса хунă. Правительствă 8 округра чрезвычайлă лару-тăру тăвасси çинчен распорйажени кăларнă, вĕсенче государствăна хирĕç выступленисем тунăшăн вĕлерме права пăракан саккун пур. Вăл округсене регулярлă çарсем йанă.

Халлĕхе палăртса çирĕплетнĕ тăрăх, генлейнăвĕцсен путчне йертсе пырас ĕçе парламентри генлейнла депутатсем те чылай хутшăннă.

Пур çведĕнисем те генлейнла путчиссем „Испани вариантне" пурнăçа кĕртме хăтланни çинчен калаççĕ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене сӑмахпа мар, ӗҫпе пӗтерме тытӑнмала

Ҫӗрпӳ парторганизацийӗнче районри пуху ҫентаберӗн 12-мӗшӗнче пулчӗ.

Ҫӗрпӳ парторганизаци ПСК(б)П Тепкомӗн 1937 ҫулти февраль-мартри пленумӗпе 1938 ҫулти йанварти пленумӗн решенисем тӑрӑх ӗҫлесе, фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ националисла агенчӗсене ҫемӗрсе тӑкас йенӗпе пысӑк ӗҫсем туса иртерчӗ. Парторганизацин кӗрешӳ пултарулӑхӗ вайланчӗ. Кун ҫинчен ССРС, РСФСР, Чӑваш АССР Верховнай Совечӗсен суйлавӗнче суйлавҫӑсен пысӑк пайӗ коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлани те лайӑх кӑтартса парать.

Райком отчочӗ тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе райком мӗнле ӗҫлени ҫинчен пулче пулсан та, вӑл отчотран тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерессиоайонра мӗнле пынине курма пулмарӗ. Агейӗв йулташ докладӗнче пуҫламӗш парторганизацисен чӗрӗ ӗҫе курӑнмарӗ.

— Ҫӗрпӳ районӗ, тӗпрен илсен, йалхуҫалӑхла район. Райком йалхуҫалӑх ӗҫӗсем ҫине ытларах пӑхна,—тет Агейӗв йулташ отчотра.— Вӑл тӗрӗс, Ҫӗрпӳ районӗ йалхуҫалӑхла район. Анчах, райком йалхуҫалӑх ӗҫӗсем ҫине „ҫакӑн пек ытларах пӑхна" вӑхӑтрах, районра коллективизаци ӗҫӗ начар пырать.

Йулашки вӑхӑтра йединоличниксем хушшинче колхоза кӗрес туртӑм ҫенӗрен вӑйланма пуҫларӗ. Анчах Ҫӗрпӳ райкомӗ аллинче ку тӗлӗшпе „тулли мар" сведенисем кӑна-ха. Ҫав сведенисем тӑрӑх, 5 йалсоветенчи колхозсене ҫенӗрен 23 хуҫалӑх кӗнӗ. Райком ССРС Верховнай Совечӗн II-мӗш Ҫессийӗ йышӑнна саккунсем ҫинчен халӑха ӑнлантарас ӗҫе тивӗҫлипе тытӑнна пулсан, унӑн сведенисем те тулли, колхоза кӗрекеннисен хисепӗ те пысӑкрах пулнӑ пулӗччӗ. Анчах ҫакӑн пек ӗҫлени ҫукха. Тата та ытларах—РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнай Совечӗсен суйлавне иртерне хыҫҫӑн, районра политикӑлӑ агитаци ӗҫӗ пачах чарӑнса ларнӑ.

Ҫӗрпӳ райпарторганизаци умӗнче Канаш—Шупашкар чукунҫул строительствине ӗҫ вӑйӗ тӑратас йенӗпе уйрӑмах ответлӑ та чыслӑ задачӑ тӑрать. Пайанхи куна строительствӑра Ҫӗрпӳ районӗнчен 150 ҫын кӑна ӗҫлет. Райком ҫак йенӗпе те кирлӗ пек ӗҫлемен.

Район чылай ӗҫсем тӑрӑх кайа йулса пырать. Государствӑна тырӑ тӑратас плана 54 процент, йединоличниксен йенӗпе—45 процент, аш-какай хатӗрлев планне 46 процент тултарнӑ. Ытти хатӗрлевсем тӑрӑх та ӗҫсем ҫавӑн пекех начар.

Тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисем уйрӑмах суту-илӳпе финанс ӗҫӗнче хытӑ сисӗнеҫҫӗ. Суту-илӳ организацисем ҫентаберӗн 10-мӗшне таварҫаврӑнӑш планне пурӗ те 69 процент ҫеҫ тултарнӑ. Тӗлӗнмеле, анчах факт, ҫӑнӑх ҫителӗкле пур ҫертенех, ҫӑкӑр пӗҫерсе сутас плана 37,7 процент кӑна тултарнӑ.

Укҫа-тенкӗ пухас плана III-мӗш кварталшӑн 48 процент тултарнӑ. Банкра тӗрӗсленмен ҫынсем ларҫҫӗ.

Чӑнах та, Агейӗв йулташ ҫак пур ытусем тӑрӑх та, кайа йулни ҫинчен калакан цифрӑсене илсе кӑтартать, анчах вӑл цифрӑсем хыҫӗнче мӗн пытанса тӑнине уҫса кӑтартмасть.

Пренире тухса калана йулташсем, уйрӑмах Виктӑрӑв, Окунӗв, Ганин т. ыт. йулташсем райӗҫтӑвкомпа йалсоветсен, суту-илӳ организацисен, хула совечӗн ӗҫӗсене хытӑ критиклерӗҫ.

Окунев йулташ: епӗр нихӑҫан йенчен те тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес ӗҫ ҫителӗклӗ пырать теме пултарайман-пар, тесе питех те тӗрӗс каларӗ.

Йулашки вӑхӑтра чылай йалсоветсенче дисциплинӑ вайсӑрланни, уйрӑм йалсовет председательсемпе ҫекретарӗсем (Паваркасси т. ыт.) ӗҫкӗпе пӑсӑлса кунӗ кунӗпе заңатисенче пулманни, йалсоветсенче те, райӗҫтӑвкомра та каҫсенче дежурствӑ сукки—ҫаксем вӗсем пурте тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерессирайонра начар пыни ҫинчен калаҫҫӗ. Никамшӑн та пӗлмен ӗҫ мар' вет, тӑшмансем йертсе пыракан работниксене ӗҫкӗ урлӑ пасса, совет, колхоз т. ыт. организацисен ӗҫӗсене аркатма тӑрӑшаҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсенче ҫаплах машинӑпа усӑ курассине хирӗҫле шухӑшсем тытӑнса тӑни те тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсем ҫинчен калаҫҫӗ („Кульмет"; Йасанкасси колхозӗсенче кӗрхи ҫӗртмене трактӑрпа тутарассине хирӗҫ тӑнӑ).

Парти райкомӗ ҫаплах парти строительстви ыйтӑвӗсем патне те таччӑн пырса тӑрайман-ха.

Агейӗв йулташ хӑйӗн отчотӗнче пӗтӗмпе пуҫламӗш парторганизацисем 12, тет. Шутлама пуҫласан—14 кӑларать: производствӑлӑ организацисем 3 (типографи, МТС, опытлӑ йалхуҫалӑх станци), шкулсенче—2, учреждениссенче—9. Тӗрӗслеме пуҫласан—шкулсенче 2 мар, 1, учрежденисенче 9 мар, 8. Колхозсенче пӗр пуҫламӗш парторганизаци те ҫук. 1938 ҫулти йанвар уйӑхӗнчен пуҫласа ҫентаберӗн 1-мӗшне ҫитиччен партие кандидатне 31 ҫын илнӗ пулсан (вӗсенчен 18 ҫын май уйӑхӗнчен вара илнӗ), вӗсем хушшинче колхоз производствинче ӗҫлекенсем пурӗ те 4 ҫын анчах!

Типографи, опытлӑ йалхуҫалӑх станци, Уполнаркомзаг ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизацисенче пайанхи куна ҫитсе те партине ҫӗнӗ членсем илес ӗҫе тытӑнман. Типографи, хула совечӗ, детгородок ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизацисенче 4 уйӑх хушшинче парти пухӑвӗсем пӗрер кӑна пулнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн райком пуҫламӗш парторганизацисене кирлӗ пек йертсе пыни ҫинчен калама та хӗнтерех. Райком работникӗсем пуҫламӗш парторганизацисенче сахал пулаҫҫӗ пулсан та, вӗсене кирлӗ пек кӑтартусем памаҫҫӗ.

Рекомендаци паракан коммуниссем хайсен ӗҫӗ ҫине ответсӑр пӑхаҫҫӗ. Ҫавӑн пек, Йакӑвлӗв йулташ партине кӗме ыйтса панӑ заявленине пӑхса тухассине, рекомендаци паракан коммуниссем пыман пирки, райкомӑн 3 хутчӗн тепӗр ларӑва хӑвармала пулнӑ.

Сочувствуйушчисен йышӗ ӳсес выранне чакса пырать. Май уйӑхӗ тӗлне сочувствуйушчисем 21 ҫын пулнӑ пулсан, халӗ пурӗ те 17 кӑна йулнӑ. Райком сочувствуйушчисен йышне ӳстерес йенӗпе ӗҫлемест.

Пирӗн парти большевиксене,—партире тӑраканнисене те, партире тӑманнисене те,—марксисӑмленинисӑм теорийӗн никӗсӗсемпе хӗҫпӑшаллантарас ӗҫре вайлӑ та хӑватлӑ хӗҫпӑшал туйанчӗ. Ҫак кунсенчен тытӑнса пӗтӗм коммуниссем, комсомолӗцсем сочувствуйушчисем, партире тӑман актив ПСК(б)П историне Сталин йулташ ҫываххӑн хутшанса ӗҫленипе ПСК(б)П Тӗпком Комиҫҫийӗ хатӗрленӗ ҫӗнӗ учебник тӑрӑх вӗренме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак учебник пӗтӗм парти вӗренӗвӗнче тӗп вырӑнта тӑмала. Анчах Агейӗв йулташ та, пренире парти вӗренӗвӗ тӑрӑх тухса калана Сергейӗв йулташ та (парткабинет пуҫлӑхӗ) ҫак ыйтӑва тивӗҫлӗ вырӑна ҫеклеймерӗҫ.

Пуху райком отчочӗ тӑрӑх йышӑнна резолюцире райком ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртса, парторганизацин малашнехи задачӗсене кӑтартса хӑварчӗ. Райкомӑн задачӗ—пӗтӗм коммуниссене пуху решенисене пурнӑҫа кӗртме мобилизацилесси пулать.

Павлӑв-Пинер.

Ӗҫлессинчен ытларах калаҫса вӑхӑта иртерне

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи парторганизаци ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн февраль-мартри пленумӗн тата йанварти пленумӗн решенийӗсемпе хӗҫпӑшалланса фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла агенчӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртерне. Руководствӑна ҫӗнӗ ҫынсем, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑракан, ӗҫҫыннисен телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗшӗн тӑрӑшакан йулташсем пынӑ. Анчах, ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн 1937 ҫулти февраль-мартри пленумӗпе 1938 ҫулти йанварти пленум решенийӗсене районри парторганизаци ҫаплах ҫителӗксӗр пурнӑҫласа пырать-ха.

Район политикӑлӑ-хуҫалӑхлӑ задачӗсене пурнӑҫлас ӗҫре кайа йулса пырать. Государствӑран илнӗ ссудӑна тавӑрса парассине 42,5 процент, натурплатӑ тыррине 72,5, аш-какай обйазательствине 54 процент, укҫа-тенкӗ планне 42 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Ҫавӑн пекех, район авӑн ҫапас, кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫсемпе те кайа йулса пырать. Тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтерес пирки кашни уйрӑм организаци, колхоз, йалсовечӗ мӗнле ӗҫсем туса иртерни, малашнехи кунсенче мӗн тӑвасси ҫинчен татӑклӑн пӗр коммунис та каласа памарӗ.

Акӑ, Лукин йулташ (райсойуз) растратӑ тӑвакансемпе хайаррӑн кӗрешсе пырас чухне, вӗсене хӳтӗлесе тухса каларӗ. Вӑл:—суту-илӳ ӗҫӗнчи работниксен ӗҫукҫи пӗчӗккӗ, ҫавӑн пирки те вӗсен хушшинче растратӑ нумай пулать,—тет. Лукинӑн сийенлӗ шухӑшне пуху сивлемерӗ. Ҫавӑн пекех, пренире тухса калаҫнӑ Железков (райҫӗрӗҫ пайӗн заведуйушчийӗ), Иерикӑв (МТС директӑрӗ) йулташсем те сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене йалхуҫалӑхӗнче мӗнле пӗтерсе пыни ҫинчен шарламарӗҫ.

Районри парти пухӑвӗ хӑйӗн решенийӗнче район руководителӗсем тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтерес йенӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ,—тесе тепӗр хут палӑртса хӑварчӗ.

Коммуниссен большевисӑма вӗренгессине те кирлӗ пусӑма лартайман. Парторганизацин отчотпа суйлав пухӑвӗ парти вӗренӗвне коммуниссене пурне те йавӑҫтарас пирки ҫирӗппӗн ҫырса хӑварнӑ пулин те, вӑл пурнӑҫланса пымасть. Хӑшпӗр коммуниссем халиччченех парти вӗренӗвӗн тулашӗнче тӑраҫҫӗ. Акӑ, пристаньре ӗҫлекен Хрипкин коммунисах илер. Парти пухӑвне ӑна йатарласа килне кайса чӗнсе пычӗҫ. Пухӑва пырсан, Хрипкин—епӗ вообще пухӑва ҫӳреме пултараймастӑп, манӑн вӑхӑт ҫук,—терӗ. Парти дисциплинине пӑсакан коммуниссемпе партин пуҫламӗш организацисем питӗ ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ. Кун пирки пуху хӑйӗн решенийӗнче те асӑнса хӑварчӗ.

Парти пухӑвӗ—тӑшмансем тунӑ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерме коммуниссене большевикла тытӑнма хушрӗ. Ку тӗлӗшпе кашни организацин, колхозӑн малашне мӗн тумалине кӑтартакан план пулмала, терӗ. Кунпа пӗрлех, пуху ССРС Верховнай Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ йышӑнна саккунсене ӑнлантарса парассине пӗтӗмпех хамӑр умри обйазательствӑсене тултарассипе ҫыхӑнтарса пымала, тесе хӑварчӗ.

А. Григорйӗв.

Тетрадсене тирпейлӗ тытма хӑнӑхтарар

Вӗренӳ программисем улшӑннипе пӗрле пуҫламӗш 4 классене вӗрентмели ҫӗнӗ учебниксенче ӗҫ нагрузки чылайах ӳснӗ. Ҫӗнӗ учебниксем киввисенчен вӗсенӗн анлӑшӗ ӳснипе уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ те ӗнтӗ. 1-мӗш классене вӗрентмели кивӗ учебникра задачӑсемпе упражненисем 530 пулнӑ, халӗ ҫӗннинче—669. Иккӗмӗш классене вӗрентмели учебникра задачӑсемпе упражненисем 628 пулнӑ, ҫӗннинче 850 виҫҫӗмӗш классен 488 вырӑнне, ҫӗнӗ учебник тӑрӑх 1037, тӑватӑмӗш классем вальли 1053 ҫити ӳснӗ. Ҫапла ӗнтӗ, шкулсемшӗн малашне, ачасене шкулта вӗрентме тата киле ӗҫ парса йама материал ҫителӗклӗ.

Математикӑна вӗрентес ӗҫе пур йенчен те анлӑлатни тетрадсемпе ӗҫлессин пахалӑхне тивӗҫлӗ вырӑна лартма пулӑшать. Лайӑх йӗркеленӗ тата тирпейлӗ ҫырнӑ тетрадь арифметикӑна лайӑх вӗренес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Час-часах ачасем арифметикӑ тетрачӗ ҫине питӗ васкаса, йӗркесӗр тата таса мар ҫыраҫҫӗ, йӑнӑшсем нумай тӑваҫҫӗ, ҫырмасӑр пушӑ вырӑнсем нумай хӑвараҫҫӗ. Ҫапла вара тетрате культурӑсӑр та вараланчӑк туса хураҫҫӗ.

Епӗ хам ӗҫлесе курни тӑрӑх, вӗренекен ачасен тетрачӗсене таса та культурӑлӑ тӑвас тесен, мӗн тумали ҫинчен кӗскен каласа парасшӑн.

Шкулта епӗ 30 ҫул ытла ӗҫлетӗп. Тетрадь маншӑн, ачасене тасалӑхпа тирпейлӗхе, йӗркелӗ тата пӗлсе ҫырма, класра тата киле парса йанӑ ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыма хӑнӑхтарас ӗҫре чи кирлӗ йапала пулса тӑрать.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫламӗшӗнче, ачасем шкула пырсан, малтанхи кунсенчех епӗ ачасене—тетрадь кашни предмет тӑрӑх вӗренсе пӗлни пуйанлӑхне пуҫтарса пымали „шкатулка" пулни ҫинчен, ҫав вӗренсе пӗлнисем пире йаланах кирлӗ пулса тӑни ҫинчен, ҫавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн хамӑр ҫырса пыракан тетрадсен пӗр листине те ҫухатма йурамманни ҫинчен тӗплӗн каласа ӑнлантаратӑп. Пӗлӳве кашни чӗрӗкре хаклана чух тата пӗр класран тепӗр класа куҫнӑ чух та тетрадь чи кирлӗ вырӑнта тӑрать.

Тетрадьне ҫавӑн пек хаклама тата йуратма хӑнӑхтарса пынӑ май, епӗ ачасен тетрачӗсене питех те тӗплӗн тӗрӗслесе пыратӑп. Математикӑ урокӗнче вӗренмели материала класри доска ҫине йӗркелӗн, пӗр ӗҫ хыҫҫӑн теприне черетлӗн вырнаҫтарса ҫыратӑп. Ачасене доска патне кӑларсан та хам мӗнле тунӑ, ҫавӑн пекех ҫырма хушатӑп.

Тетрадь ҫине мӗнле ҫырасси, таблицӑсене тӗрӗс ҫырасси тата линейкӑпа йепле усӑ курмали ҫинчен ачасене тӗплӗн каласа ӑнлантаратӑп. Арифметикӑна вӗреннӗ чух пур ӗҫе те татӑклӑ тата тӗрӗс туни, уйрӑмӑнах ку ҫырса хунӑ ҫӗрте питӗ кирли ҫинчен аса илтеретӗп. Ачасем ҫаксене майӗпенех хӑнӑхса пыраҫҫӗ те, йулашкинчен тетрадсене йӗркелӗ тата таса тытассине йуратакан пулаҫҫӗ.

Тетрадь ҫине ҫырнисем тӗрӗссипе тӗрӗс маррине кашни урокрах тӗплӗн асӑрхатӑп. Материала йӗркелӗ вырнаҫтарман пулсан йӑнӑшсене тӳрлетсе паратӑп, мӗнле тума кирли ҫинчен, цыфӑрсене мӗнле хитре ҫырмали ҫинчен тата ытти ҫинчен те вӑхӑтра астутарса тӑратӑп.

Тетрадсене 6 кунта пӗрре, пӗр сиктермесӗр, тӗплӗн тӗрӗслесе тухатӑп. Тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн тетрадь ҫине тата журнал ҫине отметкӑсем лартатӑп. Задачӑсемпе примерсене тӗрӗс тунин хакне лартнипе пӗрлех, тетрадӗн тасалӑхпе тирпейлӗхне те хаклатӑп. Ҫавӑнпа та ачасем хӑйсен тетратӗнче мӗнле те пулин тасамарлӑх пулсан, питех те ӳкӗнеҫҫӗ, тетрадсене пур те тирпейлӗ тата таса тытма тӑрӑшаҫҫӗ.

Таса та йӗркелӗ тытакан ачасен тетрачӗсене уйӑрса илсе вӗсене хам класшӑн ҫеҫ мар, ытти классемшӗн те пример кӑтартма курӑнмали вырӑна хуратӑп. Вӗсем пек лайӑх тирпейлӗ ҫырма хӑнӑхтарса пыратӑп.

Ҫакӑн пек ӗҫлесе ачасене тирпейлӗ те таса ҫырма вӗрентсе ҫитеретӗп. Хӑшпӗр ачасене тетрате кӑтартулӑ тытма хӑнӑхтарма йавӑртарах. Кун пек чух вӗсемпе уйрӑмӑн ытларах ӗҫлени кирлӗ. Вара вӗсем те тирпейлӗхе вӗренеҫҫӗ. Вӗсене тетрадсен ушкӑнӗнчи чи лайӑх ӗҫсене кӑтартатӑп. Хӑйсен ӗҫӗнчи йӑнӑшсене паллӑ туса лайӑх ҫырнине танлаштарса пӑхтаратӑп, йе мӗнле тӗрӗс шутламали-ҫырмали ҫинчен каласа паратӑп. *Ҫапла вара ачасем* пӗре ҫырнипе, куҫарса ҫырмасӑрах тӳрех тӗрӗс те хитре ҫырма вӗренсе ҫитеҫҫӗ.

Тетрадсен пахалӑхне лайӑхлатса пыни, вӗсем ҫине тирпейлӗ тата йӗркелӗ ҫырни арифметикӑна вӗренес ӗҫӗн пахалӑхне ҫӳлӗ вырӑна хӑпартать. Тӗплӗ тата йӗркелӗ ҫырни задачӑсене шутлассинчи йӑнӑшсене сахаллатать. Кунсӑр пуҫне тата вӗреннӗ материала тепӗр хут аса илнӗ чух нумай пулӑшать.

Вӗренекен ачасен тетрачӗсем культурлӑ та кӑтартулӑ пулмала.

И. Сапожникӑв.

Суйлава хатӗрленеҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Шуртавӑшри „Комбайн" колхоз ҫумӗнчи комсомол комитечӗ комсомолӑн отчотпа суйлав кампанине пур йенчен те хатӗрленсе, ана кӑтартуллӑн иртерессишӗн кӗрешет. Суйлава хатӗрленнӗ май, комсомолӗцсем хушшинче суйлав инструкцине тӗплӗн вӗренеҫҫӗ. Суйлава тата Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнине ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илес тӗлӗшпе пӗр-пӗрин хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва, стахановла йухӑма авлӑн сарса йачӗҫ. Вӗсем колхоз производствинче хӑйсен пултарулӑхне кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ.

Комсомолӗц Йа. Фомин авӑн ҫапнӑ ҫӗрте, кӗракинче хӑйӗн ӗҫ планне ытлашшипе тултарса пычӗ, А. Тимофейӗв комсомолӗц ҫулйӗр бригадин бригадирӗ пулса ӗҫлесе, хӑйне ҫирӗплетсе панӑ ҫула йакатса таса тытса тӑрать. Унӑн бригади районта малти вырӑна тухрӗ.

Комсомол комитечӗ комсомолӗцсен йышне ӳстерессипе часчасах ҫамрӑксем хушшинче те пухусем туса иртерет. Иртнӗ ҫулта пирӗн колхозра 5 комсомолӗц пулнӑ пулсан, пайанхи куна 17 комсомолӗца ҫитнӗ. Халӗ тата 7 ҫамрӑк кӗме хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем комсомолӑн уставӗпе, программипе паллашнӑ. Комсомолӗцсен хушшинче оборонӑ значокӗсен нормисене парассине те аван йӗркеленӗ. Комсомолӗцсем халӗ ГТО ҫулахи нормисене пачӗҫ. Ҫавӑн пекех тата 9 комсомолӗц „Ворошиловский срелок" нормине парса значоксем илчӗҫ.

Анчах политвӗренӳ ӗҫӗ вуҫех те ҫук. Ку тарана ҫитсе те каҫал пӗр заңати те туса иртермен. Ку йенӗпе комсомол комитетне комсомол райкомӗ те пулӑшмасть. Политкружоксене йертсе пыма пропагандис ҫирӗплетсе паман.

Комсомол райкомӗн тата пуҫламӗш организаци комитечӗн ку ҫитменлӗхсене пӗтерессипе ҫине тӑрсах кӗрешмелле. Суйлава тата Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултаракан уйӑва пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илмеле.

В. Д.

Йегор Николайӗвӑн савӑнӑҫӗ

Йегор Николайӗвӑн пысӑк савӑнӑҫ. Унӑн 10 ача. Вӗсенчен 7-шӗ вӗренеҫҫӗ. Аслӑ ачи Хусанти государствӑ университечӗн 1-мӗш курсӗнче, Марйе йатлӑ хӗрӗ—Улатӑрти вӑрман ӗҫ техникине вӗрентекен рабфакӑн II-мӗш курсӗнче, Ҫемен—Канашри педучилищӑн 1-мӗш курсӗнче, Ваҫилипе Урине—Арапуҫӗнчи туллимар вӑтам шкулта, Йакӑп—Кетеснерти пуҫламӗш шкулта 3-мӗш класра, Елекҫей 1-мӗш класра вӗренеҫҫӗ. Хальхи ҫамрӑксемшӗн вӗренӳ алӑкӗ уҫӑ. Ун ҫинчен Сталинла Конституцире ҫырнӑ. Ӗлӗк патша вӑхӑтӗнче вӗренӳ прави ҫинчен асӑнмали те пулман. Унчух чухӑнсемшӗн шкул алӑкӗ хупӑ пулнӑ. Ҫавӑн пиркийех ӗнтӗ телейлӗ ачасен ашшӗ Йегор та пӗр ҫул кӑна вӗреннӗ. Совет влаҫӗ мӗн пур ӗҫҫамрӑкӗсене вӗренме ирӗк пачӗ—акӑ мӗншӗн савӑнать Йегор Николайӗв.

Йышлӑ ҫемйелӗ пирки вӗсене кӗҫӗн ачи 5 ҫула ҫитиччен 2000-шер тенкӗ ҫуллен укҫа тухса тӑрать. Вӑл хӑйӗн ҫемйине государствӑ ҫакӑн пек пулӑшнӑшӑн партипе правительствӑна чӗререн тав тӑвать.

— Вӗренччӗр, тӑван ҫӗршывӑн тивӗҫлӗ ывӑлӗсем пулччӑр. Хамӑра государствӑ пысӑк укҫа парса пулӑшнине ӗҫпе тавӑрччӑр,—теҫҫӗ Йегор Николайӗвпа арӑмӗ.

Ачисене вӑл лайӑх тумлантарнӑ, вӗренмели хатӗрсем ҫителӗклӗ илсе панӑ. Кашни уйӑхра тӗнӗ пекех вӗсене укҫа йарса пулӑшать.

В. Алендейӗв.

„Пӗр тумлам йун йулмиччен..."

ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗн „Молодая Гвардия" издательстви Жос Федеринон „Испани ҫамрӑкӗ ҫырса пыни" йатлӑ кӗнекине пичетлесе кӑларма хатӗрлет. Пайан ҫав кӗнекерен пӗр пайне илсе пичетлетпӗр. Вӑл 1937 ҫулхи ҫулаки ӗҫсем ҫинчен ҫутатса парать. Ҫав вӑхӑтри кунсем республиканӗцсемшӗн йавӑр кунсем пулнӑ. Ҫурҫӗр Испанире ҫапӑҫакан Испании чӑсӗсене центрти фронтран уйӑрнӑ пулнӑ. Вайлӑн хӗҫпӑшалланнӑ интервентсем хӗснипе, вӑл вӑхӑтра танксем тата авиаци тытман республиканӗцсен тинӗс патнелле, тинӗс ҫулӗпе ытти фронтсене—Каталонипе Арагона каймала пулнӑ.

Кӗнекен ҫак пайӗнче автӑр ҫамрӑк бойецсен паттӑрлӑхӗ ҫинчен, вӗсем хӑйсене хӗрхенмесӗр, интервентсем малала кайассине чарса лартса, хӑйсен чаҫӗсене анаҫлӑн ӗҫлеме пулӑшни ҫинчен кӑтартса парать. Республикӑлӑ Испанин ҫамрӑк ывӑлӗсен паттӑрлӑхӗ Испани халӑхӗ Италипе Германи фашисӑмне тата унӑн сӑнчӑрти йӑттине—Франкона тӗпренех ҫӗнтересси патне илсе пырӗ.

★

1937 ҫулхи ҫула Итали дивизисем Бильбаона тата Сантандера йышӑнна хыҫҫӑн, Хихон ҫине тапӑнса пыма пуҫланӑ. Пирӗн ҫарсем йулашки минутчченех хӳтлесе, кайала чакнӑ. Ҫапӑҫусем Астуринче пынӑ, унта фашиссем Кангас де Онис, Льянс тата Рибадеселйа хулисене тытса илнӗ. Вӗсем республиканӗцсен аллинче тӑракан пӗртен-пӗр портла Хихон хули ҫине тапӑнса пынӑ.

Рибадеселйапа Вильявисиос хушшинче ҫамрӑксен социалисӑмлӑ сойузӗн икӗ батальонӗ тӑнӑ. Пӗринче астурийӗцсем, теприниче—басксем пулнӑ. Сама де Лангреори ҫамрӑк горняк Фернандес Астури батальонне йӗртсе пынӑ. Бильбаори пепельотчик Ускальдуна басксен командирӗ пулнӑ. Вӗсен йулашки вӑй пӗтиччченех республикӑ ҫарӗсен пысӑк чӑсӗсем урах ҫӗреле кайассине хӳтлесе, фашисла ҫарсем малала кайассине чӑрмантарса тӑмала пулнӑ. Подполковник Галан, коммунис, ҫирӗплӗх, паттӑрлӑх ыйтакан чапӑ задание кама шанса памалли, паллах, лайӑх пӗлнӗ.

Фернандеспа Ускальдуна пӗр-пӗрин хушшинче ҫапла калаҫнӑ.

— Епӗр вӗсене малала йарсан, вӗсем ыран Хихонра пулаҫҫӗ,—тенӗ Ускальдуна,—вилетпӗр те вӗсене малала йамастпӑр.

— Санӑн бойецсем шоссе патӗнчи ҫӳлӗ вырӑна хӳтлесе тӑрӗҫ. Есӗ вӗсемпе Рибадеселйа витӗр пыракансен ҫулне пӳлсе лартӑн. Манӑн бойецсем Кангас де Онисран тапӑнса пыракансене чарса лартӗҫ.

— Епӗ 12 сехетчен ҫеҫ тытӑнса тӑма пултаратӑп. Манӑн ҫынсем сахал тата патронсем ҫук.

— Нимӗн тума та ҫук... Есӗ вӗсене алла-аллӑн тытӑҫса ҫапӑҫма тӑрӑштар.

Астури батальонӗнчи бойецсем Трасмантерен айакра мар ҫӳлӗ вырӑнта хӑйсен позицине турӗҫ. Вӗсем ҫӗр тикӗс маррипе усӑ курса виҫӗ рет окопсем турӗҫ. Ҫӗрле пулнӑ, анчах бойецсем, пурте тенӗ пекех горнякӗсем, ҫаплах провалкӑсем карнӑ, траншейсем чавнӑ, чулсенчен тата ҫӗр тултарнӑ михсемпе бруствӗрсем тунӑ. Вӗсем Итали бригадисем часах атакӑна тухасса кӗтнӗ. Нумай ернесем хушши вӗсем пӗр чарӑнусӑр ҫапӑҫусенче пулнӑ. Ывӑлӑх та вӗсене чылайах аптратнӑ.

Фернандес темиҫе талӑк хушши ӗнтӗ куҫ хупман. Вӑл пӗрмайах ура ҫинче тӑнӑ. Ҫак ҫын сивӗч ӑс-тӑнлӑ ҫын пулнӑ. 1934 ҫулта вӑл Совет Сойузӗнче политемигрант пулса пурӑннӑ, Донбасра ӗҫленӗ, унтан Испанийе кайала таврӑннӑ. Вӑл Совет Сойузне ҫав тери йуратнӑ.

Халь Фернандес пысӑк тимлӗхпе хӑйӗн бойецӗсене сӑнанӑ. Вӗсем вилес пекех ывӑннӑ. Итальйанӗцсен атакине тӳсейӗҫ-ши вӗсем? Хӑраса ӳкмӗҫ-ши вӗсем?..

Фернандес патне ҫамрӑк анархист, батальон лейтенанчӗ Марино пынӑ.

— Хӑратӑп, бойецсем парӑнӗҫ,—тенӗ Фернандес.

— Вӗсем питӗ ывӑннӑ. Вӗсене кавказлантарас пулать...

— Епӗ те хӑратӑп,—ответленӗ Марино.—Епӗр вӗсене йаланах хавхалантаратпӑр, шантаратпӑр, чӑннипе епӗр мӗн тума пултаратпӑр-ха?

— Есӗ те парӑнатӑн пулас.

— Ҫук, нихӑҫан та. Епӗ малта пырӑп... Анчах лару-тӑру чӑннипе ҫакнашкал..:

— Нимех те мар. Йулашки ҫапӑҫура мала тухас тесен, пирӗн вӗсене чӑрмантарса тӑмала. Йулашкинчен ҫӗнтерӳ пирӗн пулать. Ӑнланатӑни?

Бойецсем вӑйлӑн ӗҫленӗ. Нумайӗшӗн куҫӗсем хупӑннӑ. Астури салтакӗ Паласуйело Селестино Антунйа патне пынӑ та махоркӑ тултарнӑ пӗчӗк хутаҫне тыттарнӑ.

— Табак ил те ман куҫа сап...

Антунйа хӑйӗн аллине астурийӗц ҫамки ҫине хунӑ.

— Есӗ сывӑрма хӑтланатӑн...

— Сап, теҫҫӗ! Куҫ харшисене выльатмала тӑвас пулать..: Куҫ хупӑнми пулать..:

— Одеколонпа лайӑхрах пулӗ...

— Ҫапла. Анчах, епӗр кунта парфюмери лавкинче мар вӗт.

Сап!.. Ҫапла, ҫапла...

Паласуело куҫӗсене йарса тытнӑ.

— Йулташ, вӗр, вӗр, лайӑх... Ну, ӗҫлеме.

Йулашкинчен, пӗтӗмпех, туса ҫитерне. Нумайӗшӗсем часах, чулсем ҫине выртса, вилнӗ пек ҫывӑрса карӗҫ. Вӗсем хӑйсен винтовкисене ҫирӗп тытса, ҫакӑ йулашки йурату пек, йулашки шанчӑклӑх пек выртнӑ.

Темиҫе бойец ҫывракансене сыхланӑ, вӗсем унтала-кунтала пӑхса тӑнӑ. Вӗсем йурӗсем йурланӑ, шӳт тунӑ тата кулнӑ.

Фернандес укрепленисене пӑхнӑ, вӑл пурне те сӑнанӑ, бойецсене хавхалантарса, йусамали ҫинчен кӑтартусем панӑ.

— Кунта вӗсем килме пултараймаҫҫӗ. Астури хӗрарӑмӗсем сире ӗненеҫҫӗ. Тӗнчери рабочисем хумханупа пирӗн вӑрҫӑна сӑнаса тӑраҫҫӗ.

— Тупа тӑватпӑр, епӗр тытӑнса тӑратпӑр! Чӗррӗн хамӑр позицине памастпӑр.

Ускальдуна бойецӗсем те тӑшмана кӗтсе илме хатӗрленнӗ. Ҫамрӑк командир:

— Ачасем! Мӗн чухлӗ хамӑр тӑван Ускадиничен*) шалала кайатпӑр, ҫавӑн чухлӗ кайала таврӑнма йавӑртарах пулать. Пӗр утӑм та кайала мар! Пирӗн кӗрешӳре вӑталӑх ҫук—йе ҫӗнтерӳ йе вилӗм...,—тенӗ.

Сантйаго, савӑнӑҫлӑ ҫамрӑк, шӳт тунӑ:

— Аҫта нимӗҫсем пур, вӑл Германи территорийӗ, тет Гитлӗр.

— Анчах нимӗҫсем пулмасан?—ыйтнӑ сержант.

— Ун чухне вӑл вӗсене илсе килет...

Шоссе ҫинче темӗнле тӗмеске курӑннӑ. Дружинниксем хӑйсен винтовкисене малала тӗллесе тӑнӑ. Тӗмеске ҫывхарса пынӑҫемӗн, вӑл ҫын йеврӗлӗ курӑна пуҫланӑ. Сывлӑшра ҫинче алли чышкине чӑмартани курӑннӑ. Начас сас илтӗннӗ:

— Йулташсем, ан перӗр... Епӗ—ача.

Чӑнах та вӑл 13 ҫулхи ача пулнӑ. Ӑна чӗтретнӗ. Вӑл Кангас де Онис хулинчен, ӑна итальйанӗцсем тытса илсен тухса тарнӑ.

Сантйаго ыйтнӑ:

— Мӗншӗн есӗ тухса тартӑн?

Ача макӑрса йанӑ:

*) Ҫапла калаҫҫӗ басксем хӑйсен ҫӗршывне.

— Унта хӑрушӑ. Вӗсем аттене тата аннене вӗлерчӗҫ. Итальйанӗцсем пырсан, хулара сулахайрисенчен никам та йулман. Чиркӗве ҫӳрекен ҫынсем ҫеҫ йулнӑ. Тата политикӑ йенӗпе ӗҫлеменнисем. Вӗсем кунӗпе ҫынсене персе вӗлерчӗҫ, кунӗпе... Манӑн аттене тата аннене...

Сасартӑк вӑл:

— Винтовкӑ кирлӗ! Парӑр мана винтовкӑ!

Хӗвел тухман-ха, фашиссен артиллерипе авиацийӗ позицисем ҫине бомбӑсем пӑрахма тытӑннӑ. Ҫамрӑк басксемпе астурийӗцсем вырӑнтан тапранмасӑр, вут айӗнче выртнӑ. Виҫӗ сехет хушши бомбӑсем пӑрахнӑ хыҫҫӑн, Итали танкӗсем тата Итали ҫуран ҫарӗ курӑннӑ. Республиканӗцсен малтанхи линичи окопсене Фернандес батальонӗнчен 200 бойец хӳтленӗ. Вӗсенчен 130 ҫын бомбӑсем пӑрахнӑ чухне вилнӗ тата аманнӑ.

Бойецсем хӑйсен йулташӗсем вилнине курнӑ. Вӗсен кайала чакма вӑхӑт та пулнӑ, анчах вӗсем хӑйсене хӑйсем хытарса, пӗр утӑм та кайала чакман. Танксемпе Италин ҫуран ҫарӗ атакӑна кӗрсе кайсан, республиканӗцсен аманманнисем 16 ҫын ҫеҫ пулнӑ. Виҫӗ сехет хушши ытларах вӗсем итальйанӗцсен атакисене сирсе тӑнӑ. Аманнисем сывӑ йулнисемпе пӗр пекех паттӑррӑн кӗрешнӗ.

Ҫапӑҫура йертсе пыракан, паттӑррӑн кӗрешекен ҫамрӑк ача хӑйӗн хулпуҫҫине пульӑ кӗнине пӑхмасӑрах Марино патне чупса пынӑ.

— Фернандес сире иккӗмӗш лини ҫине куҫма хушать. Пӗтӗмпе 26 ҫын куҫнӑ. Ыттисем унта вилсе йулнӑ.

Ăшăх сухалассине пĕтерес ыйту пирки

Хăй вăхăтĕнче сăтăрçăсем ăшăх сухалас теорине аталантарса пынă. Çак теори ĕнтĕ йалхуçалăхне пит пысăк сийен кӳнĕ, уйхирте кешласа тырă çитĕнес вырăнне, çумкурăксем çитĕннĕ. Тырпул тухăçлăхĕ начар пулнă.

Ăшăх сухалас теорине тахçанах çапса хуçнă, анчах хăшпĕр çĕрте ăшăх сухалас йĕрке çаплах пыратĕ-ха. Тутаркас районĕнче кĕркунне кĕрхи çĕртме туса хăварнă вырăна çуркунне тепĕр хут сухаланă чухне те, çавнашкалах çурхи тырăсене акмали уйсене çуркунне сухаланă чухне те 4—5 йе 6—7 сантиметр тарăнĕш çеç сухаланă. 1937 çулти кĕрхи çĕртме сухине те 8—10 сантиметр тарăнĕш кăна сухаланă. Ăшăх сухалас йĕрке пĕр Тутаркас районĕнче кăна мар, ытти районсенче те пур. Акă, Елĕк районĕнчи „Рой" колхозра хура çĕртмене 8—10 сантиметр тарăнеш кăна сухаланă.

Сухаламалли сийе кĕрхи çĕртме тата хура çĕртме тунă чухне тарăнлатмасан, хăçан тарăнлатмала? Хĕл вăхăтĕнче тарăн сухаласси çинчен нумай калаçатпăр, ĕç патне çитсен ун çинчен манса кайатпăр. Çĕртме тата хура çĕртме—сухаламали сийе таранлатмали чи лайăх вăхăт пулса тăратĕ. Апла пулсан та ăшăх сухалаççĕ. Çакă ĕнтĕ колхозниксем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçе кирлĕ пек туса пыман пирки пулса пыратĕ. Агропропагандă начар пирĕн. Ку тĕлĕшпе агрономсем те начар ĕçлеççĕ-ха. Агрономсем тата йалхуçалăхĕн ытти специалисĕсем тарăн сухаласси çинчен пур çĕрте те пĕр пек установкă пани çук. Хăшпĕр чухне тата наукăпа витĕнсе сийеллĕ шухăшпа çырнă статйасем те пичетре тухкалаççĕ. Акă, „Социалистическое строительство Чувашии" журналăн 1933 çулта тухнă номĕрĕсенчен пĕринче М. А. Алексейев агроном „Вăйлă тухăçлă çĕрулми илесси çинчен" статйа кăларатĕ. Алексейев агроном хăйĕн статйинче çĕрулми лартмалли участкăна кĕркунне сухаламали сийне пĕтĕмпех сухаламала, тесе çыратĕ. Çапла Алексейав тарăн сухалама вĕрентет темеле, анчах сухаланине сантиметрпа виççен 7—8 сантиметртан пуçласа 15—16 сантиметр таран çеç пулатĕ. Паллах, ăшăх. Тата Алексейев агроном кĕллĕ тăпра çинче сухаламали сийе çулсерен 1—2 сантиметр тарăнлатса пыма хушатĕ. Чăннипе 1—2 сантиметр таран тарăнлатса пыма май та çук. Йулашкинчен вăл тата чи тарăн сухаласси те 18—20 сантиметр кăна пулмала, тесе çыратĕ.

Андрейев ĕçне илсе пăхар тата. Вăл хăйĕн „Çĕре извĕçлессипе сухаламали сийе тарăнлатса пырасси" йатлă кĕнекинче ăшăх сухалас теорине хӳтлени курăнатĕ. Андрейев йулташ Алексейев агроном пекех чи тарăн сухалассинче чарăнса тăмали сий пур, тесе кăтартса паратĕ. Малтанхи,—сухаламали сийе çулсерен 2-шер сантиметр тарăнлатса пымала, тет пулсан, Андрейев йулташ сухаламали сийе 20—22 сантиметра çитермеле тесе çыратĕ. Тĕрĕссипе тарăн сухалассинче чарăнса тăмали çук. Тарăн сухаласси техникă ӳссе пынинчен тата мĕнле кулӳтурă лартса тунинчен килет. Халӳхи вăхăтра пирĕн уйхирсенче трактăрсем ĕçлеççĕ тата епĕр çĕре тĕрлĕрен имçамсемпе те çемçетме пултаратпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ пур уйхирсенче те 20—22 сантиметртан кайа мар, тымар-çимĕçсем тата пăрça йышши кулӳтурăсем акмали участкăсене 23—25 сантиметртан кайа мар сухаламала. Пур çĕрте те çакăн тарăнĕш сухалама тытăнсан вара çав кулӳтурăсемшĕн, уйрăмах çĕрулмишĕн 27—28 сантиметр йе ытларах та сухалама тытăнма йуратĕ.

Андрейев йулташ сухаламали сийе 20—22 сантиметра çитерне хыççăн, мĕнле кулӳтурă акса тунине пăхмасăрах ăшăх, 16 сантиметр тарăнĕш сухаласси çине куçса, сухаламали сийе каллех 20—22 сантиметра çитерес шутпа çулсерен 1—2 сантиметр тарăнлатса пыма хушатĕ. Çапла ĕнтĕ Андрейев шухăшĕпе 6—7 çул хушшинче 1—2 хутчен тарăнрах, 4—5 хутчен ăшăх сухаламала пулатĕ.

Ку вăхăтчен ăшăх сухалани уйсенче çумкурăксене ӳсме пулăшатĕ тенĕ. Анчах, Андрейев шухăшĕпе арасна, кутăнла тухатĕ. Вăл çĕртме тăвас, вĕсене пăхса тăрас, çумкурăксемпе кĕрешес, çĕре лайăх çемçетес, тарăн сухалас ĕçсем çинчен шарламасăрах иртсе кайатĕ.

Андрейев йулташ хура тата вăрманти, хирти тăпрасене сухаламали сийе 4 сантиметр сухаласа, çавăрса пăрахнă чухне удобренисем тăкмала мар, тесе вĕрентни сийенлĕ шухăш. Чăннипе удобренисем тăкмасăр сухаламали сийе тарăнлатса пыма май çук. Çавăнпа та ĕнтĕ çĕре çемçетмели йапаласем хатĕрлессишĕн пирĕн çине тăрса ĕçлеме кирлĕ.

Пирĕн çĕрсем, уйрăмах кĕллĕ тăпрасем ӳсен-тăрансене çитĕнме кирлĕ йапаласемпе пуйан мар.

Çавăн пек тăпрасем çинче минералла удобренисем тăкмасăр вăйлă тырпул туса илме çук. Сухаламали сийе тарăнлатнă чухне тислĕк, торф, компост т. ыт. те тăкмала. Кайран вара извĕç, мергелӳ, торфотур, фосфорит çăнăхĕ, йе кĕл такас пулатĕ. Кун пек чухне çĕре çемçетмели йапаласем тăкмалинормăсем пысăкрах пулмала. Сăмахран, кĕллĕ тăпрана тарăнăн сухаланă чухне органикăлă удобренисене 1,5—2 йе 2 çурă ытларах тăкас пулатĕ. Пĕр гектар çĕр çине 50—60 тоннă тислĕк, 80—90 тоннă торф, 3—4 тоннă извĕç, йе 15—20 центнĕр фосфорит çăнăхĕ тăкмала.

Сухаламали сийе тарăнлатнă хыççăн ыраш акнă пулсан, вара кайран тимофейевкăпа клевĕр акмала (тимофейевкăна—кĕркунне, клевĕрне—çуркунне). Сухаламали сийе кĕрхи çĕртме тунă чухне тарăнлатнă пулсан, вара çуркунне пăрса, чинă, урпа, сĕлĕ аксан йе çĕрулми лартсан авантарах.

Епĕр çĕре çемçетмели йапаласем çук теме пултараймастпăр. Пирĕн вĕсем темĕн чухлех. Епĕр çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене—тислĕк, торф, кĕл, фекали нумай хатĕрлеме пултаратпăр. Тислĕк тăвас çĕрте вылӳăхсен айне саракан йапаласем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Тислĕксене пăхса усрассине тĕпренех лайăхлатмала. Сивĕ кунсем пуçланиччен тислĕк усрамали вырăнсене йĕркене кĕртмеле, çĕнĕрен тумала. Органикăлă удобренисем пухас тесен, компост куписем тумала. Çав купасем çине кивĕ уламсем, çӳп-çапсем, таса мар шывсене тăкса тăмала. Çавнашкалах хĕл вăхăтĕнче кĕле тĕплĕн пуçтарса пырас пулатĕ. Торф, йушкăн хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлемеле.

Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене ытларах хатĕрлесе уйа кăларса, сухаламали сийе тарăнлатсах пырар!

Никитин.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тĕштырă управленин аслă агрономĕ.

Тырă парса татнă

Шупуç (Тутаркас р.) йалсоветне кĕрекен „Броневик" колхоз çентаберĕн 5-мĕшĕнче аван çапса пĕтерчĕ. Бригадăсен ăмăртăвĕнче иккĕмĕш бригадă мала тухрĕ, вăл пĕрремĕш бригадăран икĕ кун маларах аван çапса пĕтерчĕ. А. Василйевă, П. Овчинникăва, Й. Барашова, Т. Йанушкина, А. Илйина, Й. Седова, М. Озеркина колхозницăсем аван çапас çĕрте стахановла ĕçлесе пычĕç.

Çентаберĕн 7-мĕшĕнче колхозри бригадăсем пур кулӳтурăсем тăрăх та государствăна тырă парса татнă.

Бригадăсенчи агитатăрсем колхозниксем хушшинче кулӳтмассăлă ĕçе аван туса пыраççĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессин решенисене колхозниксем хушшинче кăна мар, йединоличниксем хушшинче те тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Çавна май йулашки кунсенче 3 йединоличник хуçалăхĕ колхоза кĕнĕ.

Г. Полӳанăв.

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

● ИШЛЕЙ. Колхозниксен пурнăçĕ çулсеренех лайăхланса пынине курса, тата ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса панă хыççăн, йулашки вăхăтра халиччене уйрăм хуçалăхпа пурăннă хресченсем колхоза кĕме пуçларĕç. Çапла, „Çĕнĕ хунав" колхоза 3 хуçалăх, „Авдан" колхоза 5, Кирăв йачĕпе тăракан колхоза 2 хуçалăх кĕчĕç.

А. Смирнов.

● ВĂРНАР. Булатăвă йалĕнчи йединоличниксем халиччĕнех колхоза кĕмесĕр пурăнса пысăк йăнăш тунине ăнланса илчĕç. Государствă колхозсене тĕрлĕрен лӳготăсем паратĕ, йединоличниксем вăл лӳготăпа усă кураймӑççĕ. Çаксене шута илсе, 22 йединоличник хуçалăхĕ Молатăв йачĕпе тăракан колхоза кĕчĕç.

П. Трофимăв.

● ЙЕЛЧĔК. Кĕçĕн Тайапа йалĕнчи 17 хуçалăх 65 йетакпа „Коммунист" колхоза кĕчĕç. Вĕсем ытти йединоличниксене те, хăйсенчен пример илсе, хресченсен пĕртен-пĕр тĕрĕс çулĕ çине—колхоз çулĕ çине тăма чĕнеççĕ.

Е. Крылова.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шăнкăртам районĕнчи „Майак" колхоз председателĕ Исханăв Йакуб йулташ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх

Çирĕп дисциплинă—стахановла ĕçĕн никĕсĕ

Епĕр, кĕпер тунă çĕрте ĕçлекенсем, Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Каганович приказне срукра пурнăçлас тесе, кашнийех социалисăмлă ăмăртăва тухрăмăр. Пирĕн бригадă халĕ пур ĕçсене те лайăх пурнăçа кĕртсе пыратĕ. Август уйăх планне 205 процент тултартăмăр. Çентаберĕн уйăх планне те çавăнтан кайа мар, нумай ытларах тултарма пулатпăр.

Çентаберĕн 8—9—10 мĕшĕсенче епĕр плана 220 процентшер ытла тултартăмăр. 200 процентран кайа нихăçан та памастпăр.

Ĕç дисциплинине çирĕплетни, кашни çынна хăйне уйрăм ĕç уйăрса пани—çакă пире лайăх ĕçлеме пулăшатĕ. Кашнийех епĕр хамăран ĕçе йуратса тăватпăр. Ĕç инструменчĕсем те лайăх, çĕмрĕккисем çук. Хăшпĕр чухне чул йе улăм çителĕклĕ тăратайман пирки çеç ĕçре чăрмав пулатĕ. Çакна руководителсен пĕтермеле.

Чукунçула туса пĕтерессишĕн епĕр пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатпăр. Çак стахановла çирĕмкунлăхра Лавренĕвпа Царйов бригадисемпе ăмăртса ĕçлесе, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешетпĕр.

И. Шукайев.

II-мĕш участкăри кĕпер тăвакансен бригадирĕ.

Ĕç ăнатĕ, ĕçлес килет

Абдулӳманăв йулташ бригади пĕрремĕш участкăра çĕр ĕçĕнче ĕçлет. 21 çын, бригадирсăр пуçне вĕсем пурте çамрăксем. Вĕсем пĕрпĕрипе ăмăртаççĕ.

Стахановла çирĕмкунлăх пуçланнă кун Саварăв йулташ звени плана 171 процент, иккĕмĕш кунĕнче 300 процент тултарчĕ. Саварăв йулташ 3,3 кубла метр çĕр чавас вырăнне 9,5 кубла метр чавса, плана 305 процент тултарчĕ.

Саварăв йулташ звенипе Агберăв йулташ звени ăмăртатĕ. Унăн звени малтанхи кун плана 158 процент, иккĕмĕш кунĕнче 204 процент тултарчĕ. Звеносем ăмăртса ĕçленĕ май, Абдулӳманăв йулташ бригади кунсерен ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыратĕ. Стахановла çирĕмкунлăхăн иккĕмĕш кунĕнче бригадă хăйĕн планне 170 процент тултарчĕ.

— Епĕр Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçул строительствине пĕтерсенех, Хусанпа Бугулӳма хушшинчи чукунçул строительствине кайатпăр. Çĕршыва вăйлă чукунçуллă державă тăвасшăн кĕрешетпĕр епĕр. Ку пирĕншĕн питĕ те хисеплĕ ĕç, пире хавхалантаратĕ, çавăнпа та ĕç ăнатĕ, ĕçлес те килет,—тет строймастăр Шихранăв йулташ, хăй йертсе пыракан бригадăн ĕçĕпе хавасланса.

М. Ейсман.

Лайăх ĕçлеме мĕн чăрмантаратĕ

Пирĕн „Болӳшевик" колхоз (Çĕрпӳ р.) чукунçул строительствине ĕçлеме 9 çын йачĕ. Епĕр кунта хавасланса килтĕмĕр, августăн 13-мĕшĕнчепе II-мĕш участкăра ĕçлетпĕр.

Анчах епĕр хамăр плана йеплĕ тултарса пыни çинчен пĕлместпĕр. Никам та шута илсе каласа паматĕ. Акă сăмахран, нумайăх та пулмастĕ 21 кубла метр çĕр чаврăмăр. Анчах нормă мĕн чухлĕ, миçе тенкĕ ĕçлесе илнĕ—пĕлместпĕр. Çакăн пекех ытти ĕçсем тăрăх та кашни кун нормăна мĕнле тултарса пынине пĕлместпĕр. Кунпа пĕрлех тата çакна каламала: пире час-часах пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçараççĕ. Паллах, ку та йĕркеллĕ ĕçлеме чăрмантаратĕ.

Т. Прокопйев.

II-мĕш участкăри çĕр чавакансен бригадирĕ.

Вунă пиншĕн

Ишлей станци патне çитсенех тăватă çамрăка тĕл пулатăн. Вĕсем „Автогигант" колхозри комсомолецсем—Горбунов, Павлăв, Горшков тата Бойкова йулташсем. Вĕсенчен аслăраххи Горбунов йулташ, вăл бригадир, вунсакăр çулта. Нихăçан та алла пуртă тытса пысăк строительствăра ĕçлемен, çамрăклăх чăрмантарнă.

Халĕ вăл бригадир. Пĕтĕм совет çамрăкĕсем пекех комсомол уйавĕ йачĕпе тăван çĕршыва аннене лайăх парне хатĕрлесе парас кăмăлпа чукунçул строительствине килнĕ. Вĕсен ĕçĕ пысăк мар, çапах та вăл пысăк хисеплĕ ĕç. Кашни кунсерен 2097 шалча касса хатĕрлемеле.

Стахановла çирĕмкунлăхăн пуçламĕш кунĕнче çамрăксен ĕç ăнмарĕ. Пĕтĕмпе те виçĕ пин шалча кăна касса хатĕрлерĕç. Сăлтав кунта инструментсенче, вĕсем мăка, хăйраса çивĕчлентерме те лайăх хатĕрсем çук. Çĕнĕ ĕç, кунашкал ĕçре нихăçан та ĕçлемен.

Иккĕмĕш куна çамрăксем лайăх хатĕрленчĕç. Камăн мĕнле ĕç тумалине пайларĕç. Строймастăр Соснин йулташ çамрăксене ĕç меслечĕсемпе паллаштарчĕ. Комсомолецсен бригади çĕнĕ хастарлăхпа ĕçе пуçăнчĕ. Ĕçшĕн чĕререн тăни, ăна йуратни тата хастарлăх йаланах çĕнтерет. Çавнашкалах Горбунов йулташ бригади те. Вĕсем ку кун çав инструментсемпех 8 пин шалча касса хатĕрлерĕç.

— Ыран 10 пине çитеретпĕрех,—тет Горбунов йулташ. Шанчăклă сăмах. Вĕсенче чĕре тулли хавасларпа хастарлăх.

М. Йакимăв.

Комсомолец бригади

Ишлей районĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан колхозри комсомолец Н. Волкăв йулташ бригади строительствăра паха тĕслĕхсем кăтартатĕ. Бригадă (10 çын) 6 кун хушши стахановла метăдпа ĕçлесе, хăйне панă плана 150 процент тултарчĕ.

Халĕ колхозран чукунçул строительствине тата тепĕр бригадă ĕçлеме кайрĕ.

Н. Бурдасăв.

Хĕрӳлĕ ĕç пыратĕ

Шупашкар станцинче стрелкăсем хунă çĕрте ĕçлекен комсомолецсем хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колбасăв йулташ йертсе пыракан бригадă стахановла çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕнче плана 150 процент, иккĕмĕш кунĕнче—160 процент тултарчĕ. Костылӳщиксем: Йевдокимăв, Димитрийев, Федăрăв т. ытти йулташсем те нормăна куллен 150—160 процентшар тултарса ĕçлеççĕ. Иевдокимăв йулташ бригади çентаберĕн 11-мĕшĕнче икĕ стрелкă лартса виççĕмĕшне вырнаçтарма тытăнчĕ.

Комсомолецсен ĕç хаваслăхĕ пысăк. Анчах хăшпĕр чухне шпалсем, релӳсăсем, болтсем т. ыт. материалсем çитменни чăрмантаратĕ. Çавсене вăхăтра тăратас тĕлĕшпе III-мĕш участкă начальникĕ Голубĕв йулташ тимлĕн тăрăшмастĕ.

Стахановла çирĕмкунлăхра стахановла ĕçлеме кирлĕ чухле материалсем тăратмала.

Р. Йемелйанăв.

Ĕçе лайăх организацилене

Платкари „Хĕрлĕ Йăлав" колхозри комсомолецсем (Шупашкар р-нĕ) чукунçул строительствинче ĕçлеме бригадă организациленĕ. Бригадăра 14 çын, вĕсем пурте комсомолецсем. Бригадăна комсомолец Гаврил Мышкин йулташ йертсе пыратĕ. Вăл членсем хушшинче ĕçе лайăх организациленĕ май, бригадă хăйне панă плана ытлашшипех тултарса пыратĕ. Канлă вăхăтра комсомолецсем вулаççĕ, калаçусем туса иртереççĕ. Вăхăт савăнăçлă та лайăх иртет.

А. Агенăв.

Финанс активĕн канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкар хула совечĕ çумĕнчи финанс çекци членĕсен учрежденисемпе предприйатисенчи комсод председателĕсен, урам комитечĕсем çумĕнчи финанс активисĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарасси шутсăр йапăх пынине палăртрĕ.

Ирĕклĕ тӳлевсем тăрăх укçа пухасси йулса пыратĕ. Рабочисемпе служăщисем йенĕпе илсен, займ укçи пухассине 54,5 процент анчах тултарнă. Ача-пăча театрĕ, Чăвашсойузĕн утилӳбази, „Спартак" обшчĕстви, кăлбаси пĕçерекен мастерской, промкоопстрой ертелĕ займшăн укçа тӳлемен. Ирĕклĕ тӳлевсем йенĕпе укçа йапăх пухăнни комсодсем начар ĕçленинден килет.

Шупашкар хули укçа-тенкĕ пухас йенĕпе Улатăр хулипе ăмăртăва тухнă. Анчах та ăмăртура тивĕçлĕ вырăна йышăнайман-ха.

Е. Филиппăв.

Страховани ĕçĕпе лайăхрах ĕçлемеле

Йĕпреç районĕнче ирĕклĕ страховани ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартман-ха. Районри финанс пайĕн госстрахинспекторĕ Маркăв йулташ ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Ирĕклĕ страховани пирвайхи çурçуллăхра пурлăха страхлас йенĕпе 70 процент, окладран иртерсе страхлас йенĕпе 75,4 процент çеç пурнăçланă.

Госстрах кантурĕн пурĕ 5 инспектăр. Иккĕмĕш участкăри Маркăв, 4-мĕш участкăри—Муратăв, 5-мĕш участкăри Илйин инспектăрсем аван ĕçлеççĕ. 2-мĕш участăри инспектăр Маркăв ирĕклĕ страховани планне 193,6 процент, 4 мĕш участкăри инспектăр Муратăв—100,7 процент, 5 мĕш участкăри инспектăр Илйин—164,7 процент пурнăçланă. Çав вăхăтрах 1-мĕш участкăри инспектăр Николайев хăйĕн пирвайхи çурçуллăх планне 37,5 процент, 3-мĕш участăри инспектăр Шумикăв 54,6 процент çеç тултарнă. Шумикăв II мĕш кварталта пушшех те начар ĕçленĕ, II-мĕш кварталта 600 тенкĕлĕх страхлатармала пулнă пулсан, 90 тенкĕлĕх çеç страхлаттарнă.

Инспекторсем ирĕклĕ страховани ĕçне вăйлатма социалисăмлă ăмăрту договăрĕсем тунă. Анчах та ăмăртăва инспектăрсем тивĕçлипе хутшăнман-ха. Инспектăр Маркăв Шумикăвпа ăмăртатĕ. Ăмăртура Маркăв малта пыратĕ, вăл пирвайхи çур çуллăхра ирĕклĕ страховани укçине 6875 тенкĕ пухнă пулсан, Шумикăв 1804 тенкĕ çеç пухнă.

Дм. Михайлăв.

Кайа йулнă

ВĂРНАР. Виççĕмĕш квартăл финанс планне çентаберĕн 10-мĕшне илсен 55 процент анчах тултарнă. Кварталти плана Мамалай йалсовечĕ 21 процент, Йермошкă йалсовечĕ 27 процент, Айкăш йалсовечĕ 31 процент çеç тултарнă.

Мамалай йалсовечĕн виççĕмĕш кварталта 9.960 тенкĕ укçа пухмала пулнă, икĕ уйăх хушшинче 2 007 тенкĕ анчах пухнă. Йалсовет председателĕ Бурмистрăв, налог агенчĕ Русской йулташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе йалти актива хутшăнтарман. Финанс çекцийĕ хут çинче çеç шутланса тăратĕ.

Иангорчинă йалсовечĕ те укçа-тенкĕ пухассипе начар ĕçлет. Иртнĕ çулта пухмала пулнă йалхуçалăх налогне 3.848 тенкĕ, кулӳтсбор 2909 тенкĕ, страховкă 953 тенкĕ пухса пĕтермен.

Йалсоветĕнче çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ кĕпересем нумай. Анчах та йалсовечĕ самообложени 7.228 тенкĕ пухмасăр тăратĕ. Йалсовет председателĕ Андрейев тата налог агенчĕ Обезйанăв йулташсем укçа-тенкĕ пухассипе начах та ĕçлемеççĕ. Кунта финанс çекцийĕ 3 уйăх хушши руководителсĕр.

Ан. Крислов.

Финанс ударникне Иванова премиленĕ

Йăршапуç йалсовечĕ (Вăрнар р.) çумĕнчи финанс çекци членĕ, вăлах Авруй колхоз председателĕ Иван Илӳич Иванов йулташ укçа-тенкĕ пухас ĕçре лайăх тĕслĕх кăтартнă. Авруй колхозĕ Вăрнар районĕнчи „Социалисăмлă ĕç" хаçат урлă районри мĕн пур колхозниксемпе йединоличниксем патне çыру йанă, вăл çырура налог тата страховкă укçисене срукчен тӳлеме чĕнĕ. Иванов йулташ тăрăшнипе Авруй колхозĕн членĕсем 1938 çулти налог тата страховкă укçисене çентаберĕн 1-мĕш тĕлне йăлтах тӳлесе татнă тата колхоз хăй те доход тăрăх илекен укçалă налогпа страховкă укçине пĕтĕмпех парса татнă. Çакăншăн Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ Иванов йулташа 75 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Италийанецсем çӳллĕ вырăна йышăннă. Анчах вĕсем унта 15 минут хушши те тытăнса тăма пултарайман, Фернандес бойецĕсен хăйулă атаки вĕсене сирсе пăрахнă. Сакăр сехет хушши çав позицире йунлă çапăçу пынă, каç пулнă чухне пирĕн йулташсем, тăшмана пысăк сийен кӳрсе, вăл вырăнтан чакнă.

Басксем те çавнашкалах фашиссен тапăнăвне сирсе тăрса, вĕсене вăйлăн чăрмантарнă. Ескалӳдуна винтовкăран персе тăрса йаланах малти ретре пынă. Вăл бойецсем ывăннине курсан, баскен никама пăхăнмала мар „Дерево Герники" йатлă гимне йурласа йанă. Ачасем те йурлама тытăннă. Ывăнман пекех...

Ескалӳдуна тăракан бойецсен группине танксемпе Итали çуран çарĕ уйăрса йанă. Ескалӳдуна аманнă. Вăл пеме пултарнă, анчах вăл вилнĕ пек пулса выртнă. Италӳйанец-командира курсан Ескалӳдуна хăвăрт ура çине тăнă. Унăн пичĕ йунпа витĕннĕ. Çиçĕмлĕ хăвăртлăхпа вăл куçне шăлса илнĕ те фашис чĕри тĕлне пенĕ.

— Ил, сволоч! Асăнмалăх коммунисран!..

Пĕр харăс пени çирĕп баска йăвантарнă. Командир вилни баскене хумхантарнă. Анчах Сантйаго комиссар ларутăрува çăлнă. Вăл италӳйанецсем пулеметран персе тăнине пăхмасăр тӳрленсе тăнă та:

— Малала, хăйуллăскерсем! Ескалӳдуна ӳтне туртса илмелле.

Вăл фашиссене чупа персе малалла чупнă, револӳвертен пеме унăн патронсем пулман. Комиссар хăйулăхĕ çамрăк баскене хавхалантарнă.

— Малала!

Пысăк хăйулăхпа вĕсем контратакăна кĕрсе кайнă. Фашиссем тарнă. Бойецсем йуратнă Ескалӳдуна ӳчĕ таврала хурлăххăн тăнă...

Каçпала фашисла захватчиксем тапăнса пыма тытăннă, вĕсене хирĕç кĕрешме Сантйаго йертсе пынă. Фашиссен самолӳочĕсем, тупăсем тата пулеметсем тытман Астури баталӳйонĕнчи бойецсем çине тăхлан пулӳăсем тăкнă.

Селестино Антунӳйа çăмăл пулеметран персе тăнă. Паласуело ăна патронсем парса тăнă.

Селестино вĕсен тăрринчен вĕçекен фашиссен самолӳочĕсем çине хăйарлăхпа пăхнă.

— Тăхтăр, сволăчсем! Епĕ сире кăтартăп... Вăл çĕр çине чăсăлса выртнă, пулемета çӳлелле тĕлленĕ. Нумай вăхăт та иртмен, кĕрлени илтĕннĕ. Истребител вĕсем çине аннă пекех анатĕ.

— Шăп, йулташ,—тенĕ Селестино лăпкăн.—Шăп. Давай!..

Пулеметран персе тăнă. Самолӳот кутăн-пуçăн анса, чулсем çине тирĕннĕ.

— Акă тата тепĕр кайăк вĕçет,—кăтартнă Паласуело.

— Апат пама хатĕрлен...

Лӳотчик вĕсене курнă пулас, айалала ана пуçланă.

— Кĕçех, ак вăл ташласа илет...

Чăнах та темиçе минутран самолӳот „ташласа" çĕр çинчи чул çине персе аннă.

Селестинопа Итали самолӳочĕ хушшинче дуел пулса иртнĕ. Селестинона çак ĕç сахал пек туйăннă. Унтан вăл каллех пеме тытăннă. Виççĕмĕш самолӳот Антунӳйапа Паласуелă патĕнчен айăкра мар ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. Ыттисем иккĕшĕ тарма ĕлкĕрнĕ. Паласуело сиксе тăнă. Хăйĕн чышкине çĕклесе кăшкăрнă:

— Хăйулăх пулсан килĕр!.. Хăравçăсем! Мерзавĕцсем!

Каçхине Итали çарĕсем республиканецсен позицийне йышăннă. Çĕрле çамрăк астурийĕцсемпе баскесем контратакăна кĕнĕ. Патронсем сахалланса йулнă ĕнтĕ. Динамитлă патрунсемпе усă курса, вĕсем италӳйанецсене кайала чактарнă, анчах ирпеле каллех кайала чакма тивнĕ. Фернандес тăшмансен пулӳисем айĕнче бойецсене хавхалантарса тăнă:

— Епĕ Российăра пулнă. Епĕ красноармейецсене курнă. Вĕсем пирĕн çинчен шухăшлаççĕ. Епĕр—Испанири красноармейецсем. Вилетпĕр, йулташсем, анчах кайала чакмастпăр! Пĕр тумлам йун йулмиччен! Йулашки патрона çитиччен!

Вĕсен çар хатĕрĕсен запасĕсем пĕтсе пынă. Вилес хăрушлăх пулнă, анчах республиканецсем чăрмантарса тăшмана хумхантарнă. Италӳйанецсем, Испани чĕлхипе начар пĕлекенскерсем, кăшкăрнă:

— Сире мĕнрен тунă, хĕрлĕ чортсем? Тимĕртен?.. Ĕç вĕçне çитес чухне Испанин виçĕ салтакĕ фашисла çартан республиканецсем йенне тарса каçнă. Сантйаго хумханнă.

— Мĕн турăр, ачасем? Хал есĕр мĕншĕн тартăр? Курмастăр-и, епĕр пĕтрĕмĕр? Сирĕн кайала каймала. Çухаласа кайнă, тесе калăр. Пирĕн йенне тепĕр чух какăр...

— Çук, йулташсем, кайала каймастпăр,—татăклăн ответленĕ тарса каçнисенчен пĕри.—Вилмеле пулсан, сирĕнпе пĕрле вилетпĕр...

Пирĕн икĕ баталӳйонра та бойецсем сахалланса йулнă. Пĕр пайĕ Вилӳйависносе патнеле чакнă. Ыттисем Сиеро патнеле, Сама де Ангр йенеле кайнă. Вĕсемпе пĕрле Фернандес тата Паласеуло та кайнă.

— Пирĕннисем хӳтлесе тăма пултараймаççĕ,—тенĕ хуйхăлăн Паласуело Фернандесе.—Фашиссем Хихон хулине йышăнаççĕ. Пире вĕсем йăлтах уйăрса пăрахаççĕ...

— Паттăрлăх, Паласуело! —ответленĕ Фернандес. — Патронсем, динамитсем тупатпăр. Тусем çинче кашкăрсем пек кĕрешетпĕр.

Бойецсем малала пынă. Вĕсен чĕрисенче çĕнтерес шанчăк пулнă. Тусем патне вĕсен кĕрешӳ, тăван çĕршыва йуратни, тăшмана курайманлăх йуррисен сассисем усăмлăн кайнă.

Çамрăксенчен тăракан баталӳйонсем тата республикă çарĕн ытти паттăр отрйачĕсем фашиссене вăйлăн чăрмантарса тăни 20 пин бойеца тинĕс урлă урăх çĕре ăнăçлăн куçарма май панă. Хал вĕсем Каталони тата Арагони çĕршывĕсенчи тăшмансене хирĕç кĕрешеççĕ. Хихон фашиссен аллине куçрĕ. Анчах, Астуринчи тусем çинче нумай горнӳаксем, рабочисемпе хресченсем йулнă. Партизанла вăрçă çаплах пыратĕ...

Германи Чехословаки çине тапăнассипе усăнах хăрат

Гитлĕр самахĕ пирки Чехословаки хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

Фашиссен Нюрнбергри „сĕсĕнчĕ“ Гитлĕрăн Чехословакине хăратса калана сăмахĕсем Чехословаки общĕствĕннăçĕн йышлă сийĕсене çав тери хытă тарăхтарса йанă. Мĕнпур хаçатсем: ку сăмах вăл пĕтĕм тĕнчери мире хирĕç пырат тата Германин Йевропари агрессивлă чăн-чăн тĕллевĕсене уçса парат,—тесе паллă тăваççĕ. Чехословакин йертсе пыракан хаçачĕсем çапла шутлаççĕ: Гитлĕр сăмахĕнче Судет облăçĕнче плебисцит туса ирттересси çинчен тата вăл облăçе Германи çумне çыпăçтарасси çинчен татăклă требованисем кăларса тăратман пулсан та, çапах та Йевропари, уйрăмăн илсен, Чехословакири çивĕчленсе çитнĕ лару-тăру çывăх кунсенчех пурпĕрех тата ытларах çивĕчленсе пымала,—теççĕ.

(ТАСС).

Л. Н. Толстой наследникĕсем

Вырăссен аслă писателĕн Л. Н. Толстойăн внучки—Софийа Андрейĕвна Толстойа калана тăрăх, хальхи вăхăтра Совет Союзĕнче, унсăр пуçне, аслă писателĕн тата темиçе наследниксем пурăнаççĕ.

Софийа Андрейĕвна вăл—писателĕн 1916 çулта вилнĕ ывăлĕн Андрей Львовичăн хĕрĕ пулат. Вăл 1900 çулта çуралнă, 1910 çулта вилнĕ Лев Николайĕвича вăл лайăх астăват. Хальхи вăхăтра Софийа Андрейĕвна Мускавра пурăнат. Л. Н. Толстой музейĕнче ĕçлет, литературăпа ĕçлет.

Писателĕн иккĕмĕш внучки, Анна Ильйинична Толстойа, писателĕн 1936 çулта Америкăра вилнĕ тепĕр ывăлĕн—Ильйа Львовичăн хĕрĕ пулат. Вăл та, Софийа Андрейĕвна пекех, музейра ĕçлет.

Писателĕн внукĕ Çергей Çергейĕвич Толстой та пурăнат, хальхи вăхăтра вăл государтсвăран уйрăм пенси илсе тăрат.

Л. Н. Толстойăн правнукĕсем Совет Союзĕнче виççĕ. Анна Ильйиничнă ывăлĕ Çергей Николйĕвич 29 çулта. Вăл Мускавра техник пулса ĕçлет. Иккĕмĕш правнукĕ—17 çулхи Александр Ильйич—Фрунзе районĕнчи 36-мĕш шкулта 10-мĕш класра вĕренет. Вăл лайăх активист-общественник, шкулти стена хаçачĕн редакторĕ. Виççĕмĕш правнукĕ Софийа Андрейĕвна 16 çулта. Вăл Йаснайа Полйанăра пурăнат, 9-мĕш класра вĕренет.

Суту-илӳ ĕçĕнче улшăну çук

ЙЕЛЧĔК. Пайшчиксем ийунь уйăхĕнче пулса иртнĕ йалпо тата райпотребсойуз конференцийĕсенче суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Суту-илӳ ĕçне вăйлатмали меслетсем çинчен ПСК(б)П райком бӳровĕ çирĕп кăтартусем панă. Анчах та райпотребсойуз (председателĕ Патшин) ку таранчен те ĕçе çĕнĕле туса пыма тытăйман. Райпотребсойуз суту-илӳ ĕçне лайăх, тĕрĕслевнĕ çывсене хутшăнтарма шутламаст. Кадрсене шута илни çук, суту-илӳ ĕçĕнче мĕнле çынсем ĕçленине пĕлмеççĕ.

Райсойуз начар йертсе пынине пула прикашчиксем хушшинче государствă дисциплинине пăснисем, растратăсем час-часах пулаççĕ. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне районĕпе 15.464 тенкĕ растратă пулнă, 1938 çулта каллех 9607 тенкĕ растратă тунă. Кооператив укçине çаратакансенчен суд урлă шыр са илесси те йапăх пырат. Судпа следстви органĕсем те ку ĕçре йапăх ĕçлесе пыраççĕ. Лаш Тайабари йалпо вальли судпа 11.761 тенкĕ укçана халь те шыраса илмен.

Таварçавăрăнăш планне квартăлтан кварталă тултарса пыма пур условисем те пур. Апла пулин те район центрĕнчи йалпо магазинĕ 2-мĕш квартăл планне 77 процент, Лаш Тайабари йалпо 76 процент çеç тултарчĕç. Таварçавăрăнăш планне тулманни йалпо работникĕсем суту-илӳ тума пĕлменнинчен килет. Лаш-Тайабари лавкара тăвар, спичкă, кăраççин тата ытти кирлĕ таварсем те чылай вăхăт пулмарĕç. Çĕнĕ Пăва йалповĕн Тĕмерти уйрăмĕнче сахăр, табак сутмаççĕ. Тăрмăшри лавкара халь те табак, чей, кăраççин çук.

Аслă Тайабари йалпо та халăха кулленхи кирлĕ таварсене çителĕклĕ кӳрсе килмест. Кунта кĕрпе, макарон, вермишель, хуран-чугун, витресем час-часах пулмаççĕ. Кунсăр пуçне, культурăлă суту-илӳ тума пĕлмеççĕ. Таварсем тусан айĕнче, урайĕнче пыльчăк, прикашчиксем ховатсăр сутă тăваççĕ.

Пайшчик.

Китайри вăрçă

Китай çарĕн бойецĕсем фронта кайас умĕн. (Союзфото).

Вулав çурчĕсенче

Вăрнар. Çĕнйахакассинчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ Г. Петров хайĕн умĕнчи задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн хастарлăн ĕçлесе пырат. Вăл хайĕн кулленхи ĕçĕнче иртнĕ суйлавсенче çĕнĕрен хутшăннă çуламлă агитатăрсемпе, политвулавçăсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе пырат, вĕсене куллен кăтартусем парса вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе пырат. Колхозниксем тырă вырнă вăхăтра вулав çурчĕ хайĕн ĕçне пĕтĕмĕшпех уйа куçарчĕ. Кунта вулав çурчĕн пуçлăхĕ Петров пуçарнипе бригадăсем тăрăх культпалаткă кăларса йанă. Культпалаткăра колхозниксене вулама тĕрлĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем çителĕклĕ пулнă. Унтах купăс тата патефон та пулнă.

Вулав çурчĕ хальхи вăхăтра ССР Союзĕн Верховнай Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса парассипе ĕçлет.

Çĕнйахакасси вулав çурчĕ йулашки вăхăтсенче хайĕн оборудованине те чылайах вăйлатрĕ. Пайанхи куна вулав çурчĕн икĕ ретлĕ купăс, 1 патефон, балалайкă, гитарă, биллиард, шашкă-шахмăт тата домино пур. Радио ĕçлет.

Колхоз çамрăкĕсемпе колхозниксем хайсен пушă вăхăчĕсенче вулав çуртĕнче пулаççĕ. Вĕсем вулав çуртĕнче тĕрлĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем вуласа йе тĕрлĕ вăйăсем выльаса хайсен вăхăчĕсене культурăлăн ирттереççĕ.

Аçăмçырмари вулав çурчĕ иртнĕ вăхăтра питех те начар ĕçлесе пынă. Халĕ кунти вулав çуртне Смирнов йулташ килнĕ, вăл вулав çурчĕн ĕçне урăхлатса çĕнетрĕ. Вулав çурчĕ хайĕн кулленхи ĕçĕнче массăпа таччăн çыхăнса ĕçлет. Пайанхи куна вулав çуртĕнче биллиард, патефон, шашкă шахмăт пур. Радио ĕçлет. Вулав çурчĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче ăнлантарса парассипе хастарлăн ĕçлесе пырат.

Çавăн пекех Мăн Йавăшри, Уперти вулав çурчĕсем те лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

Çав вăхăтрах Сендимиркинăри вулав çурчĕсем (пуçлăхĕ В. Виктăрăв, Пăртасри—Кузнецов, Хирпуçĕнчи—Никифăрăв, Хорнзорти—Шашков) нимĕн те тумаççĕ. Кунта ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене массăна ăнлантарассипе нимĕн те туман. Библиотекăра кĕнекесем çитмеççĕ. Вулав çурчĕн нимле оборудовани те çук.

Районри çутĕç пайĕн культпросвет инструктăрĕ Майорăв вулав çурчĕсене йертсе пырассине начарлатнă. Йулашки 2—3 уйăх хушшинче вулав çурт пуçлăхĕсен заочнă курсĕн пĕр заньатийĕ те пулман, канашлусем пулса иртмеççĕ. Майорăв йулташ вулав çурчĕсене пулăшмаст.

Вулав çурчĕсене куллен пулăшса пырса вĕсен ĕçне сӳлти вырăна лартмала.

Ст. Улангай
Ан. Крислов.

Ĕçлемен вулав çурчĕ

Вăрман Йенĕшри (Шăхасан р-нĕ) вулав çуртне сахалах мар колхозниксем çӳреççĕ. Апла пулин те вĕсем хушшинче нимĕнле культурăлă-массăлă ĕç те çук. Вулав çуртне пыракан хаçат журналсене вулав çурчĕн пуçлăхĕ И. Смирнов колхозниксене вулама памаст. Колхозниксем ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ кăларнă саккунсем çинчен ăнлантарассипе И. Смирнов нимĕн те ĕçлемест. Вулав çурчĕ çумĕнче стена хаçачĕ тухса тăмала. Анчах пĕр номĕр кăларнă та лăпланса ларнă.

Колхозниксен кану вăхăтне культурăлă ирттерессине организацилемелех.

И. Бычков.

142 çынна сыватрĕ

Трахработницă Елизаветă Алексейĕвă Енĕшкассинчи (Çĕрпӳ р.) трахпунктра виççĕмĕш çул ĕçлет. Йулашки, икĕ çул хушшинче тăрăшса ĕçленипе вăл 142 çынна трахомран сыватрĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна темиçе хут та премиленĕ.

Колхозницăсем отпускпа усă кураççĕ

ÇĔРПӲ. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, „Ĕмĕт“ колхозри 15 колхозницă йăвăр çын шучĕпе ишкер уйăхлăх отпуск илчĕç. Çитес кунсенчех тепĕр 6 колхозницăна çавăн пек отпуск памала.

А. Иванов.

Музыкă грамăтине заочнă вĕренмели курс

Халăх пултарулăхĕн Н. К. Крупскайа йачĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри çурчĕ çумĕнче (Мускав) музыкăна заочнă вĕренмели 6 уйăхлăх курс виççĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл курсра колхозсенчи хор тата хĕлĕхлĕ инструментсемпе выльакан музыкă кружокĕсен руководителĕсем вĕренеççĕ. Курсантсем çав курсра нотăсене вулама вĕренеççĕ, курсра илнĕ пĕлӳпе кирек мĕнле музыкăлă практикăра та усă курма, кирек мĕнлĕ инструментпа та выльама пĕлеççĕ.

Кăçал çав курсра Чăваш республикĕнчен 11 çын вĕренеççĕ, вĕсенчен икĕ заочник—В. Лаптенков (Çĕмĕрле) тата В. Бельаков (Çĕрпӳ) вĕренсе тухса, документсем те илчĕç. Ытти 9 заочник малала вĕренеççĕ.

Çентабĕр уйăхĕнче Чăваш республикинчи халăх пултарулăх çуртне республикăри колхозсенчи хор тата музыкă кружокĕсен руководителĕсенчен зайавленисем килме пуçларĕç, вĕсем 1938/39 вĕренӳ çулĕнче хайсене Халăх пултарулăхĕн Крупскайа йачĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри çурчĕ çумĕнчи музыкăна заочнă вĕренмели курса илме ыйтаççĕ. Сăмахран, Тогайĕвă йалĕнчен (Сĕнтĕрвăрри р.) А. Петровпа И. Николайĕв йулташсем зайавлени панă.

Ф. Ландышĕв.

14.408 мăшăр çăматă

Деткомиссин Шупашкарти хапрăкĕ куллен кирлĕ таварсем кăларассине вăйлатсах пырат. Кăçал 8 уйăх хушшинче хапрăк 14.408 мăшăр çăматăсем туса кăларнă. Иртнĕ çулхи 8 уйăхрипе танлаштарсан кăçал 9287 мăшăр ытларах кăларнă. Çав вăхăтрах хапрăк продукци хакне 10 процент йӳнетнĕ.

Следстви органне панă

КУСЛАВККА. Иван Йандралăв Ырашпулăхĕнчи йалпора йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа прикашчикре ĕçлесе кĕске вăхăтрах 1295 тенкĕ растратă тунă. Çакна вăл тӳлесе татнă хыççăн тата 350 тенкĕ растратă тунă.

Йалпона пыракан дефицитлă таварсене Йандралăв хай килне туртнă, тăванĕсене панă, çитменнине укçине касса хумасăр пынă. Сăмахран, ийунь уйăхĕнче йалпона икĕ байкăвай одейал килнĕ, вĕсене иккĕшне те Йандралăв хай вальли килне илсе кайнă. Май уйăхĕнче 14 мăшăр калуш килсен, икĕ мăшăрне хай вальли илнĕ. Çак уйăхрах йалпона килнĕ виçĕ майкăна хай килне илсе кайнă т. ыт. те.

Йандралăв йалпора тӳррĕн ĕçлес вырăнне, ĕçхалăхне суйса, улталаса тата таварсене катăк виçепе сутса пынă. Августăн 13-мĕшĕнче йалпона 3 тенкĕ те 60 пус тăракан 42 килограм сельодкă килнĕ пулнă. Çапах та Йандралăв çак пулла кашни колхозника 275 грамшар çеç парса, килограмне 3 тенкĕ те 64 пуса сутнă, виçе çине хуна пулăна таймасăрах алăпа пусса тайтарса пара-пара йавă.

Август уйăхĕнче 75 метр çитсă килнĕ хыççăн, магазина усмасăрах чӳречерен 47 метр сутнă, ытти 24 метрне хай ирĕкĕпе урăх çĕре сутнă.

Çакăн пек ирсĕр ĕçсем тунăшăн Иван Йандралăва прикашчикрен хăтарнă, халĕ унăн ĕçĕ тăрăх следстви пырат.

Й. Квасков.
И. Сидоркин.

Хула тăрăх

Автобус терчĕ

Шупашкар хулинче йулашки вăхăтра виçĕ автобус çӳреме пуçларĕç. Епĕр кунта виççĕшĕ çинчен те мар, пĕрин çинчен сăмах тапратасшăн. Вăл—Калинин урамĕ—Хĕрлĕ плошчĕт—Ворошилăв урамĕ—Кирăвски поçолăк маршрутпа çӳрекен 14—17-мĕш номĕрлĕ автобус.

Кунсерен ӳссе, сарăлса пыракан Кирăвски поçолăка пассажирсем турттаракан автобус çӳреме пуçлани пурне те хавхалантарчĕ. Виçĕ километр çурран утса ыванни мар, автобус-автобусах. Анчах автобусăн терчĕ пысăк. Сăмахран, поçолкăна машинăн ирхине 8 сехет тĕлне пымала пулсан, вăл йаланах çур сехет кайа йулса çитет. Малтанхи рейспа ларса кайакансем заньатине ĕлкĕрме пултараççĕ. Иккĕмĕш рейспа килсен 20 минут кайа йулатăн.

Ирхине поçолăкра 40—50 çын машинă кĕтсе тăраççĕ. Унта рабочисем, служăщисем, ачасене йаслĕне, ача сатне леçме кайакан хĕрарăмсем, шкул ачисем те пур. Автобус çине пассажирсене лартма пуçласан чăннипех тавçăрса илме хĕн шавлă сценă пулса иртет. Вăйлăраххисем сире-сире кĕрсе кайаççĕ, ачалă хĕрарăмсемпе ватă карчăксем, шкул ачисем тула тăрса йулаççĕ, шавлаççĕ, йĕреççĕ. Кăшни кунах çавăн пек.

Çак йĕркесĕрлĕх пĕтерме питĕ çăмăл—автобусăн поçолкăна 8 сехет тĕлне вăхăтра çеç пымала.

Пĕр ик сăмах—билет хакĕ çинчен. Шупашкар хула совечĕ малтанах çапла калатчĕ: поçолăка автобус çӳресен пассажирсем пулмĕç, машинăн пушăла çӳреме тивĕ, вăл убыткă çеç кӳрет,—тетчĕç. Халь апла калама çук. Пассажирсем йаланах нумай пулаççĕ. Çавăнпа пулас, хула совечĕнчи коммерсатсем билет хакне 10 пус ӳстерчĕç: халь поçолăкран Хĕрлĕ плошчĕте çитме 40 пус вырăнне 50 пус илеççĕ. Ытти хуласенче автобус билечĕн хакĕ нихăçан та çавăн пек пулнине курман епĕр.

Пассажир.

Çĕнĕ вырăнсене

Пирĕн Инçет-Хĕвелтухăç хĕррисем кашни çулах пуйанланса пыраççĕ. Çĕнĕ хуласемпе поçолкăсем шăтса тухаççĕ, колхозсем организациленеççĕ. Вăрман пулнă вырăнсенче акма йурăхлă çĕрсем тăваççĕ, шурлăхсене типĕтеççĕ.

Зейă тата Селемджи йатлă йуханшывсен çӳлĕрехри территорийĕ—çĕнĕрен организациленекен районсенчен пĕри. Акмали çĕрсем тата улăхсем кунта тĕштырăсем акса тума тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме майсем параççĕ. Нумай пулмаст организацилеиĕ поçолкăсене: Потехинă, Петровкă, Брйантă, Мальцев-Луг тата ыт. çывăх вăхăтсенче татах та аслăлатса тĕреклетеççĕ.

Çĕнĕ çĕре куçса килекенсене государствă пысăк пулăшу парат. Кунта килсен, кашни çемйе валли пахча вырăнĕ тата пĕрлешсе акса тăмашкăн 1,5—2 гектар акма йурăхлă лайăх çĕр параççĕ. Çĕнĕ çĕре куçса килнĕ кашни çемйене памали акма йурăхлă çĕр лаптăкне 7—8 гектар таран ӳстереççĕ. Акмали плансене пăхса, колхозсене кивçен вăрлăх параççĕ. Кунсăр пуçне тата çĕнĕ çĕре куçса килнисене малтанхи çулĕнче кивçен продовольстви параççĕ (кашни çемйене 3-шер центнĕр таринччен). Кивçен илнине натурăпа икĕ çул хушшинче тӳлесе татмала. Хуçалăха пуçласа йама кашни çемйене, виçĕ çул хушшинче тӳлесе татмала, 400 тенкĕ кивçен параççĕ.

Вăрман пулнă вырăнсене тырă акма йурăхлă тума тата акмали çĕрсемпе улăхсем тума йатарласа машинă-трактăрлă станцисем организациленĕ. Ку ĕçсене государствă шучĕпе тăваççĕ. Çĕнĕ çĕре куçса килнисене çуртсем тата кил хушшинчи постройкăсем параççĕ.

Кашни поçолăкра: шкул, вулав çурчĕ, медицинă пувкчĕ тата ытти общĕствăлă çуртсем тăваççĕ.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи çĕнĕ вырăнсене куçаракан пай Инçет-Хĕвелтухăçри Зейă тата Селемджи йатлă йуханшывсем патĕнчи территорине йаланлăхах пурăнма куçма кăмăл тăвакан колхозниксенчен нумай зайавленисем илет. Колхозниксем хайсен зайавленийĕсенче вĕсене унта куçса кайма унти нумай çĕрсем, вăрмансем, улăхсем тата вăл вырăнсенче ылттăн, металл, çĕркăмрăк пурри, пулăсем тата тискер кайăксем тытма пуйан вырăнсем пурри, çавăн пекех тата сарăлса пыракан чукунçул строительстви илĕртни çинчен çыраççĕ.

Пулни-иртнисем

Вăрман пушарĕ. Çентабĕрĕн 10-мĕшĕнче, чукунçулпа иртсе пыракан пăравусран сирпĕнсе йулнă вут-хĕмсенчен Çĕмĕрлерен икĕ километрта вăрман çунма пуçланă. Пушар 20 гектар çинчи вăрмана саврăса илнĕ. Çĕмĕрлери рабочисем тата çывăхри колхозниксем пулăшнипе вăрман пушарне çав кунах сӳнтернĕ.

Вăрă. Орнашри (Тутаркас р.) Кузнецов Семен чылай вăхăт колхозра ĕçлемесĕр вăрă-хурахла ĕçсемпе пурăннă. Орнаш участкинчи Йершов агрономăнне 2500 тенкĕлĕх тĕрлĕрен йапаласем вăрланă. Йулашки кунсенче 3 колхозник килĕнчен пурлăхсем вăрласа тухнă. Халĕ ăна тытнă. Ĕçе суда панă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ПĔЛТЕРӲ

„Красная Чувашия“ хаçатра кăçалхи çентабĕрĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа ПСК(б) Парти историн кĕске курсне пичетлеме тытăннă пирки хаçата çентабĕр уйăхĕшĕн çыранса илессине малала тăснă:

Вăл хаçата киосксенче те ытларах сутаççĕ.

ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ВАСКĂР

Çыхăну управленин пичет саракан пайĕ.

2—1

ШУПАШКАРТИ
ЛЕНИН ЙАЧĔПЕ ТĂРАКАН
ÇĔВЕ ÇĔЛЕКЕН ЕРТЕЛ
çĕнĕ вырăна Ленин урамĕнчи
„Промкоопторг“ МАГАЗИНĔН
çуртне, çӳлти хутлăха куçнă, килкартинчен кĕмеле.

Ертел çĕлеме паракансен материалĕпе тĕрлĕрен тумтирсем çĕлеме заказсем йышăнат.

ПРАВЛЕНИ.

2—1

Варвитирен сыхланасси

Çулахи вăхăтра çамрăк ачасем тата çитĕннисем те варвитипе ытларах чирлеççĕ. Варвити чирĕ тĕрлĕ сăлтавсенчен пулат. Таса мар шыв йе пăсăла пуçланă апат-çимĕç варвитипе чирлеттереççĕ. Шăрăх вăхăтра шыв та, апат-çимĕç те часах вăраланма, пăсăлма пултараççĕ. Лайăх хатĕрленĕ апат-çимĕç те вăхăтсăр çисе пырсан йе таса шыв та шăрăх вăхăтра виçесĕр ĕçсе пырсан варвитипе чирлеттерме пултараççĕ.

Сăмахран, кăкăр сĕчĕ ĕмекен ачасене макăрмассеренех, йе пысăкрах ача-пăчасене аса илмессеренех апат çитерсе пырсан, вархырăм вăйсăрланат, вара çинĕ апат-çимĕç пыршăсенче йĕркелĕ çĕрейменнипе варвитипе чирлеттерет, ăша пăтратарат, хăстарат.

Çынна варвитипе чирлеттерекен ахаль куçа курăнман тĕрлĕрен микробсем те пур. Çав микробсем ăша лексен пыршăсенче ĕрчесе кайаççĕ, çинĕ апат-çимĕçе йĕркелĕ çĕртсе пымасăр варвити тăваççĕ. Çав çын тула тухнинче унашкал микробсем темĕн чухлех пулаççĕ. Унта шăнасем пырса ларсан, вăл микробсем шăнасен çăмлă урисем çумне çыпăçаççĕ, шăнасем урлă ĕçмели шывсем çине, апат-çимĕçсем çине йе пахча-çимĕççем çиме сарăлса кайаççĕ. Çанталăк ăшă тăна пирки çав нӳрĕ йапаласем çивче вăл микробсем ĕрчĕсе пыраççĕ. Çак микробсем йерлĕ апат-çимĕçе йе шыва ĕçсе çисен, микробсем çын ăшне лекеççĕ, вара варвитипе чирлеттереççĕ. Çапла вара шăнасем урлă та варвити чирĕ сарăлса кайат.

Варвити тăвакан микробсем пыршăсенче ĕрчесе пырса, пыршăсене пӳрленекен тăваççĕ, вырăнĕ вырăнĕпе йун тухакан сурансем пулаççĕ. Çын вара пӳрлĕ-йунлă тула тухма пуçлат. Çавăнпа та вăл чирĕ йунлă варвити тенĕ.

Варвитипе чирленĕ çын ăшĕнче çинĕ апат-çимĕç йурăхсăр пулса çĕрнисем тата микробсем çинчи йадсем йуна сăрăкса кĕрсе, çынна вăйсăрлатаççĕ. Çавăнпа та варвитипе чирленĕ çынна малтанхи вăхатра нимĕн те çитермеççĕ, тула хăвалакан емел кăна параççĕ. Ыратни лăпланма хырăм çине ăшă йапала тытаççĕ. Унтан пыршăсенчи микробсене вăйсăрлатмали емел ĕçтереççĕ.

Варвити чирĕсенчен сыхлăнас тесен, çаксене астуса пымала: апат-çимĕççене, ĕçмели шыва тусан ларасран, шăнасем, хурт-кăпшанкăсем пырса вараласран типтерлĕ витсе, питĕрсе тытмала. Хăшпĕрисем çăкăрсене, çăкăр татăксемпе тĕпренчĕкĕсене, апат çинĕ чашăк-тирĕксене сĕтел çинчен вăхăтра пуçтарса пымаççĕ. Вара вĕсене шăнасем пырса вараласçĕ те, çав хуçалăхри çынсем варвитипе чирлеме пултараççĕ. Пахча-çимĕççене шăлса йе вĕри шывпа çуса çимеле.

Кăкăр сĕчĕ ĕмекен ачасемпе пысăкрах ачасене вăхăтра кăна апатлантарса пымала, вĕсене пăчăхтарса чĕркесе тытма та, хĕвел çинче ытлашши хĕртме те йурамаст. Кăкăр сĕчĕ ĕмекен ачасене вĕретнĕ шыв ĕçтермеле, вăхăтра çуса тасатса, чĕрнисене касса тата кашни апат çийес умĕнех аллисене çуса пымала.

Тула тухмали вырăнсене питех те таса тытмала, тула тухнисем çине шăнасем ларасран тăпрапа витсе йе емел сапса пымала.

Йунлă варвитипе чирленĕ çынсене чи малтанхи кунсенчех пульницăна хума тăрăшмала. Ку чиртен укол тумали емел те пур, анчах вăл малтанхи кунсенчех тусан кăна усăллă.

Çапла вара варвити чирĕнчен сыхлăнас тĕлĕшне тасалăх йĕркисене хытă тытса пыни кирлĕ.

Врач Е. Макарăв.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн
Канашри йалхуçалăх механизаци шкулĕ
МЕХАНИКСЕН тата ШОФĔРСЕН
ОТДЕЛЕНИНЕ
ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

Шкулта механиксен 18 уйăх, шофĕрсен 5 уйăх вĕренмеле. Шкула хĕрарăмсемпе арçынсене 18 çултан пуçласа 35 çула çитнисене—шофĕрсемпе механиксем пулма сывлăх çителĕклисене илеççĕ. Механиксен отделенине вĕренме кĕрес текенсене политграмăтă, математикă, вырăс чĕлхи предмечĕсем тăрăх 5 çул вĕреннĕ чухлĕ, трактăр тата йалхуçалăх машинĕсен ĕçĕсем тăрăх трактăр отрйачĕн бригадирĕсен курсĕнче вĕреннĕ чухлĕ ыйтаççĕ.

Шофĕрсен отделенине вĕренме кĕрес текенсем политграмăтă, математикă, вырăс чĕлхи предмечĕсем тăрăх испытани тытаççĕ.

Механиксен отделенинче испытани çентабĕрĕн 15-мĕшĕнче, вĕренӳ заньатийĕсем октабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шофĕрсен отделенинче испытани октабĕрĕн 1-мĕшĕнче, вĕренӳ заньатийĕсем октабĕрĕн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен çак документсене тăратмала:

1) МТС йе колхозран тата учреждениран илнĕ командировкă, 2) зайавлени, 3) мĕн чухлĕ вĕренине кăтартакан свидетелствă, 4) ĕçленĕ çĕртен илнĕ характеристикă, 5) сывлăх çинчен пĕлтерекен справкă, 6) паспăрт, йе çар кĕнекине хайĕн кăтартмала, 7) шофĕрсен çара пуçăн ӳкертернĕ 6 фотокартăчкă.

Шофĕрсен отделенине колхозсем йе ытти организацисемпе учреждениссем командировкă парса вĕренме йанă пулсан, вĕреннĕшĕн шкула 1.500 тенкĕ укçа тӳлемеле.

Шкула вĕренме илнĕ курсантсене общежити, вăртса тăмали вырăн, учебниксем, шофĕрсене 80 тенкĕ, механиксене 120 тенкĕ стипенди параççĕ.

Колхозсем тата ытти организацисемпе учреждениссем панă командировкăпа вĕренме кĕнĕ шофĕрсем 1.500 тенкĕ тӳленĕ укçа шучĕпе услови илеççĕ.

Шкулта столовăй пур.

ДИРЕКЦИ.

3—2

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 60 пус. 3 уйăха 7 т. 84 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 485 Гор. Чăбоксары, типографи № 1 заказ № 711, ф. 6 60×94 п. л.